83
Р60
Ч-422219

В.Г. Родионов
Л.Ю. Трофимов

# ЛИТЕРАТУРА ПĔЛĔВĔН КӲРТĔМĔ

Лекцисен курсĕ

Шупашкар 2009

Национальная библиотека ЧР
4-042219

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ВӖРЕНТӲ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ВӖРЕНТӲ АГЕНТСТВИ
Профессиллӗ аслӑ пӗлӳ паракан федераллӑ патшалӑх учрежденийӗ
«И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ»

**В.Г. Родионов Л.Ю. Трофимов**

# Литература пӗлӗвӗн кӳртӗмӗ

Лекцисен курсӗ

Шупашкар 2009

ББК Ш 4 в. я 73
Р58

**Родионов В.Г.**
**Р58** Введение в литературоведение: курс лекций / В.Г. Родионов, Л.Ю.Трофимов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2009. – 84 с.

Составлен с учетом обновленной программы курса «Введение в литературоведение». Рассмотрены актуальные проблемы литературоведения. Приведены списки основной и дополнительной литературы и вопросы для самопроверки.

Для студентов I-II курсов дневного и заочного отделений факультета чувашской филологии и культуры.

Утверждено Методическим советом университета

Отв.редактор: канд.филол.наук, доцент В.А. Абрамов

Проверено 2 7 МАР 2017

ББК Ш 4 в. я 73

И-4229

© Родионов В.Г.,
Трофимов Л.Ю., 2009

## Умсăмах

«Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» («Введение в литературоведение») курс тĕллевĕ – литературоведени ăслăлăхĕпе тата тытăмĕпе, анлă ăнлавсен (терминсен) системипе, тĕрлĕ ăслăлăх ĕçĕсемпе паллашасси, вĕсене ăса хывса илемлĕ хайлава тĕрлĕ енчен хак парса тишкересси. Паллах, çак тĕллеве тишкерӳ мелĕсене, хайлав тытăмĕпе пĕрлĕхне пĕлмесĕр пурнăçлама май çук.

Чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче вĕренекенсемшĕн çак курс питех те пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен студентăн мĕн диплом алла иличченех литература историйĕн аталанăвне вĕренмелле, тĕрлĕ çыравçă пултарулăхне тĕпчемелле, илемлĕ хайлавсене тишкермелле, курс ĕçĕсемпе диплом ĕçĕсене çырса хӳтĕлемелле. Апла пулсан студентсем «Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» курса еплерех вĕреннинчен ытти курссене ăнăçлă алла илме пултарасси те чылай килет.

Ку таранччен «Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» тата «Литература теорийĕ» курссен чиккине çирĕппĕн палăртни, вăл е ку материала хăш курсра тĕплĕн вĕрентмелли çинчен уçăмлăн калани пулман. XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче çак икĕ курсăн чиккине палăртса çитермелли пирки Мускав университечĕн профессорĕсем те çырчĕç. Сăмахран, В.Е.Хализев каланă тăрăх, «Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» курсра чи малтан *поэтикăна*, унтан хайлав элеменчĕсене тата хайлава тишкермелли принципсене вĕрентмелле. Ку таранччен учебниксене кĕмен, çав хушăрах литература ăслăлăхĕнче анлăн усă куракан ăнлавсем çинчен калаçни те кирлĕ. Тĕслĕхрен, «текст» ăнлав, интерпретаци ыйтăвĕсем, хайлав пĕрлĕхĕ, литературăн эстетика аспекчĕсем çинчен ытларах каласа памалла. Илемлĕ хайлава тĕрлĕ шкулсем (форма шкулĕ, структурализм) еплерех пăхнине илсе кăтартни те курсра тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

И.Ф.Волков профессор Раççей вузĕсенчи филологи факультечĕсенче программа тăрăх литература теорийĕпе икĕ курс вуланине палăртать. Малтанхи курссенче

«Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» е «Поэтика», аслă курссенче «Литература теорийĕ» е «Литература теорийĕн никĕсĕ». Вăл вара «Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕнче» чи малтан темăна, проблемăна, илемлĕ хайлав идейине, героя е лирика геройне, мотива, характера, обстоятельствăсене, сюжета, сюжет тулашĕнчи элементсене, композицие тата илемлĕ пуплеве пăхса тухать. Эппин, И.Ф.Волков профессор та тĕпре илемлĕ хайлав пĕрлĕхĕ, унăн поэтики пулмалли çинчен калать.

Хамăрăн программăна хатĕрленĕ чухне эпир çакăнта палăртнă сĕнӳсене шута илме тăрăшрăмăр. Чăн та, «Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» курс «Литература теорийĕ» курсăн умĕ. Курсăн тĕп тĕллевĕ – хайлав пĕрлĕхне курма, ăна тĕрлĕ мелсемпе тишкерме хăнăхтарасси. Тишкерӳ мелĕсемпе уйрăлса тăракан шкулсем çинчен те хайлава тĕпчес ыйтусемпе çыхăнтарса пăхмалла.

Программăн пĕрремĕш пайне «Илемлĕ литература хăй евĕрлĕхĕ» тесе калама май пур, мĕншĕн тесен курсра илемлĕ хайлав пĕрлĕхĕ тĕпре тăрать. Малтанах калаçăва илемлĕ литература çинчен пуçламалла. Филологипе сăмах культури, вĕсен пайĕсем: çырусăр сăмахлăх, çыруллă сăмахлăх – çак ыйтусене пурне те малтанхи темăсене кĕртсе пăхмалла.

Енчен те эпир илемлĕ литературăна малтан *сăмах* енчен пăхрăмăр пулсассăн, ăна *илем* енчен хаклани те кирлĕ. Çавăн пекех литературăна пĕтĕм культура контекстĕнче курмалла. Çакă вара хайлав функцийĕ çинчен калаçма хистет.

Программăн иккĕмĕш пайĕнче калаçу чи малтан хайлав пĕрлĕхĕ, унтан поэзи, драма тишкерĕвĕ пирки, несĕлсен хăй евĕрлĕхĕ çинчен пулмалла. Чăннипе çак пай курсăн никĕсĕ, тĕпĕ. Умĕнхи пай хăйне евĕр кӳртĕм, ăнлантарни. Ахальтен мар программăн пĕрремĕш пайĕ виçĕ темăран тăрать, иккĕмĕш пай – 14 темăран.

Лирика хайлавĕн тишкерĕвне темиçе темăна пайласа тухнă. Лирика тата лирика геройĕ, тема сăнарĕпе мотив çинчен уйрăммăн калаçма палăртнă. Ун хыççăн

лирика сăнарĕ, сăнарсен çыхăнăвĕ тата тропсем çинчен сăмах хускатмалла. Ку вăл ерипен содержанирен форма тарăнăшне кĕрсе пынине пĕлтерет. Текст семантикине тĕпченĕ чухне ытларах композици çинче чарăнса тăмалла. Композици вăл лирика содержанийĕпе формине пĕрлештерсе тăракан элемент. Форма тарăнăшне кĕрсе пынăçемĕн эмоци речĕ çинчен ăнлантарса пани те кирлĕ. Унтан метр, виçе, çемĕ, тĕрлĕ повторсем, састаш (рифма), аллитераци еплерех эмоци тума пулăшнине пăхса тухмалла. Чăваш сăввин хăй евĕрлĕхĕ çинчен каламалла.

Проза тишкерĕвĕн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Проза хайлавĕн системинчи элементсен çак пайĕсене тĕпчемелле:

1. Идейăпа эстетика содержанийĕ. Кунта героикăлли, трагедилли тата комедилли çинчен калани вырăнлă.

2. Тема содержанийĕ. Кунта характер, обстоятельство, фабула çинчен сăмах пымалла.

3. Текст семантики. Çак шайра хайлаври пейзаж, персонаж, портрет, сюжет, пайăр пуплев çинчен калаçмалла.

4. Илемлĕ пĕлтерӳ йĕркеленĕвĕ. Хайлав системин элеменчĕсен çак шайĕнче вăхăтпа талккăш (хронотоп), диалог, калу формисем çинчен ăнлантарса пани вырăнлă.

5. Автор пуплевĕ.

Драма тишкерĕвĕ проза тишкерĕвне çывăх, çавăнпа та уçса памалли темăсем те пĕрешкел. Çапах та драма хайлавĕсен уйрăмлăхĕсем те çук мар. Вĕсем ытларах форма шайĕнче курăнаççĕ (калу форминче, композици йĕркеленĕвĕнче, тулашри тата шалти ĕç-пуçа кăтартнинче т.ыт.те).

«Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» курсра тĕрлĕ терминсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ чăвашла çав халлĕнех çӳрет, хăшĕ-пĕри вара вырăслисĕр пуçне чăвашла формăпа та тĕл пулать: рифма – састаш, ритм – çемĕ, время и пространство – вăхăтпа талккăш т.ыт.те. Чăн чăвашлисем те çук мар. Вĕренекенсем чăвашла терминсен пĕлтерĕшĕсене аванрах пĕлччĕр тесе

уйрăм словарь хушса панă. Çакă вăл тема шухăшĕсене тĕрĕсрех те тарăнрах уçса пама та пулăшать.

Кашни тема хыççăн харпăр хăйĕн пĕлĕвне тĕрĕслемелли ыйтусемпе ĕçсем пур. Çав ыйтусем тĕрĕслев ĕçĕсен темисем те пулма пултараççĕ. Çавăн пекех пĕтĕм темăпа усă курмалли литература пур.

Куçăн мар вĕренекенсен «Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» курспа уйрăм тĕрĕслев ĕçĕ çырса экзаменччен икĕ уйăх маларах чăваш литератури кафедрине çитермелле. Апла вĕсен чăваш литературинчи илемлĕ хайлавсене хăйсен кăмăлĕпе суйласа илсе тишкермелле:

1) лирика ретĕнчи хайлава;
2) эпика ретĕнчи хайлава;
3) драма ретĕнчи хайлава;

Пĕлӳ´ шайне 3-мĕш семестрта экзамен парса тĕрĕслеççĕ.

## *I лекци*
## Литературоведени курсĕн тĕллевĕ тата унăн ăслăлăхри вырăнĕ

### 1. Литературоведени ăнлав пĕлтерĕшĕ тата унăн ăслăлăхри вырăнĕ

«Литературоведение» термина малтанласа ăслăлăхра нимĕçсен ученăйĕ Т.Мундт «История современной литературы» (1842) тĕпчев ĕçĕнче усă курать. К.Розенкранц тĕпчевçĕ 1848 çулта çак термина ăслăлăхра çирĕплетет. Икĕ ученăйĕ те филолог мар, философ пулнă.

«Литературоведени» ăнлава ăслăлăхра тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен ăнлантарнă. Апла пулин те, XX ĕмĕрте ку ăслăлăх пысăк çитĕнӳсем турĕ. Сăмах май, М.В.Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕ кăларнă программăра (1998) çакнашкал ăнлантарса çырнă: «Литературоведение – филологическая наука о сущности, происхождении и развитии художественной словесности как вида искусства». Чăваш литература пĕлĕвĕнче çакнашкал ăнлантару йăлана кĕнĕ темс пулать: литературоведени – илемлĕ литература аталанăвне тĕпчекен ăслăлăх, виçĕ тĕп пайран тăрать: сăмахлăх теорийĕ, сăмахлăх историйĕ тата литература критики. Литературоведенин хушма дисциплинисем: историографи, палеографи, текстологи, библиографи. **Литература теорийĕ** – сăмах искусствин хăйне евĕрлĕхне тĕпчет, унăн аталану законĕсене, хайлав тытăмĕн уйрăмлăхĕсене, меслетсене, жанрсене, илемлĕ хайлавсен чĕлхине, сăнарлăх кӳмелли ытти мелсене тишкерет. **Литература историйĕ** – тĕнче литературипе тĕрлĕ халăхсен литературисен аталану процесĕсене тĕпчет, вĕсен тĕрлĕ тапхăрти аталанăвĕн хăйне евĕрлĕхне палăртать, уйрăм çыравçăсен пултарулăх çулне тишкерет. **Литература критики** – илемлĕ хайлава тата пурнăçăн пулăмĕсене хаклани, ăнлантарни. Литература критики, сăмахлăх историйĕпе танлаштарсан, ытларах ку чухнехи литература юхăмĕнче пулса иртекен пулăмсене çутатнипе, халĕ пичетленекен хайлавсене пăхса тухнипе палăрса тăрать. Литература критикин жанрĕсем: статья, рецензи, тиш-

керӳ, литература портречӗ, критиксен диалогӗ, тавлашу реплики, библиографи заметки.

Илемлӗ сӑмахлӑх пирки ӑслӑлӑхра палӑртнӑ шухӑшсене пӗр системӑна кӗртсе ӑнлантарнине литературоведени теме май пур. Литературоведени ытти ӑслӑлӑхсемпе те тачӑ ҫыхӑнура тӑрать. Ҫакна хушса панинче 2 № таблицӑра курма пулать.

## 2. Словарь ӗҫне йӗркелесси

Ӑнлавсемпе терминсен списокӗ: литература несӗлӗсем, лироэпика, литература теорийӗ, литература историйӗ, литература критики, литературоведени, идеал, идея, идиома, автор сӑнарӗ, акросӑвӑ, икӗ йӗркеллӗ сӑвӑ, акт, илемлӗ литература, литература, аллитераци, марш, метр, метафора, метоними, илемлӗх мелӗ, троп, аллегори, сӑвӑ виҫисем, миниатюра, импровизаци, монолог, диалог, имажинизм, анакруза, инверси, натурализм, ренессанс, интервью, новелла, цитата, анафора, эпифора, интермеди, юрӑ, ода, оксюморон (оксиморон), герменевтика, интерпретаци, ҫырса кӑтартни (ҫыра), характеристика, пейзаж, портрет, шухӑша ӳкни, хирӗҫлетӳ (антитеза), интерьер, очерк, лирика темин тӗсӗсем, антропоморфизм, палеографи, филологи, текст, ассонанс, эвфемизм, памфлет, интрига, пароди, патетика, афоризм, характер, ирӗклӗ сӑвӑ, баллада, поэма, вӑйлату (градаци), эпитет, ирони, юмор, сатира, сарказм, камит, эпиграмма, калав, калану (эпос), тӗрленчӗк, кантата, персонификаци, эллиппсис, пӗчӗклетӳ (литота), фабула, повествовани, сюжет, сюжет элеменчӗсем, хирӗҫтӑру (конфликт), хирӗҫтӑру элеменчӗсем, калуҫӑ (повествователь), калавҫӑ (рассказчик), ӳкерчӗк, повесть, поэзи, поэтика, тема, проблема, тип, тишкерӳ, проза, прототип, символ, психологилӗх, публицистика, искусство тата унӑн тӗсӗсем, водевиль, танка, хокку, лирика, эпопея, сӑнар, риторика, силлабика, силлабо-тоника, тоника, састаш (рифма), романс, романтизм, реализм, выляну (драма), герой, персонаж, тематика, классика, стопа, цезура, документлӑ проза, композици, вӑхӑтпа талккӑш (хронотоп), жанр, жаргон,

тёрленчĕк, очерк, форма тата содержани, классицизм, клаузула, çемĕ (ритм), перипети, пафос тата унăн тĕсĕсем, романтика, эссе, коллизи ...

## 3. Усă курма кирлĕ тулли литература[1]


1. Анализ художественного текста (Лирические произведения): хрестоматия / сост. А.М. Магомедова, С.Н. Бройтман. – М., 2004. – 334 с.

2. Анализ художественного текста (Эпическая проза): хрестоматия / сост. Н.Д. Тамарченко. – М., 2004. – 442 с.

3. Введение в литературоведение: хрестоматия. – М., 1988. – 480 с.

4. Введение в литературоведение: хрестоматия. – М., 1997. – 350 с.

5. Введение в литературоведение: учеб. пособие / Л.В. Чернец, В.Е. Хализев, А.Я. Эсалнек и др. / под ред. Л.В. Чернец. – М., 2004. – 680 с.

6. Введение в литературоведение: учебник / Н.Л. Вершинина, Е.В. Волкова, А.А. Илюшин и др. / под общ. ред. Л.М. Крупчанова. – М., 2005. – 416 с.

7. Волков, И.Ф. Теория литературы / И.Ф. Волков. – М., 1995.

8. Бахтин, М.М. Вопросы литературы и эстетики / М.М. Бахтин. – М., 1975.

9. Бахтин, М.М. Эстетика словесного творчества / М.М. Бахтин. – М., 1979.

10. Грехнева, В.А. Словесный образ и литературное произведение. / В.А. Грехнева. – Н. Новгород, 1997.

11. Есин, А.Б. Принципы и приемы анализа литературного произведения: учеб. пособие / А.Б. Есин. – М. 1998, 2004.

12. Кузьмичев, И.К. Введение в общее литературоведение XXI века: лекции / И.К. Кузьмичев. – Н. Новгород, 2001. – 324 с.


---

[1] Кунта тата малалла литературăна алфавит йĕркипе мар, темăшăн пĕлтерĕшлĕрех пулнине кура вырнаçтарнă.

13. Мещерякова, М.И. Литература в таблицах и схемах / М.И. Мещерякова. – М., 2000. – 224 с.

14. Озеров, Л.А. Необходимость прекрасного / Л.А. Озеров. – М., 1983.

15. Основы литературоведения: учебное пособие для филологических факультетов педагогических университетов / под общ. ред. В.П. Мещерякова. – М., 2000. – 372 с.

16. Поспелов, Г.Н. Теория литературы / Г.Н. Поспелов. – М., 1978.

17. Родионов, В.Г. Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар, 1996.

18. Родионов, В.Г. Чувашский стих /В.Г. Родионов.– Чебоксары, 1992.

19. Родионов, В.Г. Чувашское и тюркское стихосложение: учеб. пособие / В.Г. Родионов. – Чебоксары, 1986.

20. Родионов, В.Г. Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора // Чувашский фольклор. Специфика жанров / ЧНИИ. – Чебоксары, 1982.–С.54-105.

21. Рождественский, Ю.В. Введение в общую филологию / Ю.В. Рождественский. – М., 1979.

22. Степанов, В.А. Анализ художественных произведений в национальной школе: пособие для учащихся и преподавателей / В.А. Степанов. – Чебоксары, 2000.

23. Тимофеев, Л.И. Основы теории литературы / Л.И. Тимофеев. – М., 1976.

24. Тимофеев, Л.И. Слово в стихе / Л.И. Тимофеев. – М., 1987.

25. Тимуков, А.Н. Чувашское литературоведение и критика: библиографический указатель / А.Н. Тимуков. – Чебоксары, 1993.–464 с.

26. Тюпа, В.И. Анализ художественного текста: учебное пособие / В.И. Тюпа. – М., 2006. – 336 с.

27. Федоров, Г.И. Художественный мир чувашской прозы 1950-1990-х годов / Г.И. Федоров. – Чебоксары, 1996.

28. Федоров, Г.И. Чăваш литературин сăнарлă пуплев теорийĕ / Г.И. Федоров. – Шупашкар, 1994.

29. Федоров, Г.И. Сăнарлă сăмах шыравĕ / Г.И. Федоров. – Шупашкар, 1996. – 224 с.

30. Федотов, О.И. Введение в литературоведение / О.И. Федотов. – М., 1998. - 144 с.

31. Федотов, О.И. Основы русского стихосложения. Теория и история русского стиха / О.И. Федотов // в 2 кн. Кн. 1. Метрика и ритмика. – 360 с; кн. 2. Строфика. – М., 2002. – 488с.

32. Хализев, В.Е. Теория литературы / В.Е. Хализев. – М., 1999.

33. Холшевников, В.Е. Анализ композиции лирического стихотворения // Анализ одного стихотворения. – Л., 1985.

34. Литературный энциклопедический словарь[2]. – М., 1987.

35. Энциклопедический словарь юного литературоведа. - М., 1998.

36. Квятковский, А.П. Поэтический словарь / А.П. Квятковский. – М., 1966; 1998.

37. Остолопов, Н.Ф. Словарь древней и новой поэзии / Н.Ф. Остолопов. – СПб., 1821.

38. Литературная энциклопедия. Словарь литературных терминов. – М., Л., 1925.

39. Метин, П.Н. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем / П.Н. Метин, А.И. Мефодьев. – Шупашкар, 1997.

40. Тимофеев, Л.И. Словарь литературоведческих терминов / Л.И. Тимофеев, С.В. Тураев. – М., 1974.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. *Литературоведени* термина ăнлантарни.

2. Литературоведенин тĕп пайĕсем тата хушма дисциплинисем.

3. *Литературоведенин* курс тĕллевĕ тата унăн ăслăлăхри вырăнĕ.

---

[2] Малалла: ЛЭС. М., 1987.

### Усӑ курмалли хушма литература

Степанов, В.А. Анализ художественных произведений в национальной школе / В.А. Степанов.–Чебоксары, 2000.– С. 6, 83, 191-201.

Литературный энциклопедический словарь.–М., 1987. – С. 198-201.

Энциклопедический словарь юного литературоведа. –М., 1998.–С.148-150.

## *II лекци*

## Филологи. Ҫырусӑр тата ҫыруллӑ сӑмахлӑх. Илемлӗ литература

«Филология» сӑмаха С.С.Аверинцев ҫапла ӑнлантарать: Филология (греч., букв. – любовь к слову, от phileo – люблю и logos – слово), совокупность, содружество гуманитарных дисциплин – лингвист., литературоведч., исторических и др., – изучающих историю и сущность духовной культуры человечества через языковый и стилистич. анализ письменных текстов. Текст, все его внутр. аспекты и внеш. связи – исходная реальность филологии» (ЛЭС. С.467).

Филологи – текста тӗпчекен ӑслӑлӑх, ҫавӑнпа та унӑн никӗсӗнче яланах текст тӑрать. Ҫав хушӑрах студент текст пирки ҫырса хунӑ япала, сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ пек кӑна ӑнланни тӗрӗсех мар. Текст ҫырулӑх ҫук тапхӑрта та йӗркеленсе ламран лама сӑмах вӗҫҫӗн куҫать. Эппин текст ҫыруллӑн тата ҫырусӑр ҫӳреме, йӗркеленме пултарать.

Текста сӑмахсен йӗркеленӗвӗ, ҫыхӑнӑвӗ, пуххи теме май пур. Унӑн яланах пуҫламӑшӗпе вӗҫӗ пур. Филолог вара ҫав сӑмахлӑ текста ӑнлантараканӗ, тӗпчекенӗ, унӑн шухӑшне уҫса параканӗ. Апла филологӑн тӗп материалӗ – сӑмах тата текст. Текста хайлаканӗ тата йышӑнаканӗ (вулаканӗ, итлекенӗ, кураканӗ, тӗпчекенӗ) пур. Ҫавна кура текстсем калуллӑ, ҫыруллӑ, пичетлӗ пулаҫҫӗ. Сӑмахран, ҫыруллӑ текста автор е темиҫе ҫын кӑна ву-

лавҫӑ патне ҫитерет пулсан, пичетлӗ текста вуншар ҫын ҫитерет. Ҫавӑн пекех текст уйрӑм ҫыннӑн тата ушкӑнсен пулма пултарать. Вӗсен кашнин хӑйсен стилӗ пур. Филологи тӗллевӗ текстсене пӗр-пӗринчен уйӑрса илесси, тӗпчесси, ӑнлантарасси.

Текста мӗнлерех тӗпчеме пулать-ха? Ку ыйтӑва тӗрӗс хуравлас тесен чи малтан Ю.В.Рождественскин «Введение в общую филологию» (М., 1979) кӗнекине тӗплӗн тишкермелле. Унта калана тӑрах, текст тӗпчевӗ виҫӗ енлӗ пулмалла: 1) текст еплерех майпа, мӗнле условисенче йӗркеленнине, авторлӑха, вулакана (итлекене), содержание, индивидуаллӑха тӗпчени; 2) текст конкретлӑ пуплев жанрне еплерех условисенче кӗнине, унӑн ҫав жанрти вырӑнне, вӑл ытти текстсемпе еплерех ҫыхӑнура тӑнине (чӗлхе тата содержани тӗлӗшӗнчен) тӗпчени; 3) текстсене культура аталанӑвӗн пӗлӳпе пуплев хутшӑнӑвӗн прогресӗн фонӗсенче ӑнланнин тата ӑнлантарнин историлле саккунӗсене шырани, пӑхса тишкерни.

Пӗрремӗшпе иккӗмӗш енӗ филологин уйрӑм пайне кӗрет, виҫҫӗмӗш вара пӗтӗмӗшле филологин ыйтӑвӗ шутланать.

Вӗренекенӗн уйрӑмах ҫырусӑр сӑмахлӑх тӗсӗсене лайӑхрах ӑнланса-пӗлсе ҫитермелле. Ю.В.Рождественский унӑн виҫӗ тӗсне палӑртать:

1. Пӗлтерни (сообщение). Ҫын текста итлет (унпа паллашать) те урӑх ҫынна каласа памасть. Пӗлтернӗ чухне текст тепӗр (темиҫе) хут каланмасть. Хыпар сас-хураран хӑйӗн тӗрӗслӗхӗпе, пӗр хут ҫеҫ илтнипе уйрӑлса тӑрать.

2. Сас-хура (звуки-слухи). Текст темиҫе хут каланать. Пӗр текстах кашни ҫын патне уйрӑмшар ҫитет. Сӑмахран, элек – тӗрӗс мар сас-хура, культура пӗлтерӗшӗсӗр, часах манӑҫа тухать. Пӗр-пӗр вырӑнти пуплеве, калаҫӑва тӗпе хурать.

3. Халӑх сӑмахлӑхӗ (фольклор). Текст вариантлӑ, ламран лама куҫать, нумай хут каланать (юрланать), унӑн сӑнарлӑх, халӑхлӑх тата ытти паллисем пур.

Функци тӗлӗшӗнчен ҫырусӑр сӑмахлӑхӑн ҫак виҫӗ тӗсӗ тӗрлӗрен. Пӗлтернипе сас-хуран культура пӗлтерӗшӗ пачах та ҫук, вӗсен содержанийӗ ламран лама куҫса

пымасть. Халăх сăмахлăхĕ вара ÿсĕмрен ÿсĕме, ăруран ăрăва куçса пырать, вăл кашни çыншăн пĕлтерĕшлĕ.

Студентăн çак темăна вĕреннĕ чухне М.М.Бахтинăн «Проблема речевых жанров» ĕçне (Бахтин М.М. Эстетика словесного творчества. М., 1979. С.247-280) таран пĕлмелле. Вăл пуплев жанрĕсем ансаттисем (пĕрремĕшлисем) тата кăткăссисем (иккĕмĕшлисем) пулма пултарнине палăртнă. Ансаттисен йышне пĕтĕм çырусăр сăмахлăх, çыруллă сăмахлăхăн пĕчĕк калăпăшлă жанрĕсем (калав, тĕрленчĕк, очерк т.ыт.те) кĕреççĕ. Кăткăс жанрсен ретĕнче роман, драма, тĕрлĕ тĕпчев ĕçĕсем, публицистикăн пысăк калăплă жанрĕсем тăраççĕ. Вĕсем хăйсен ăшне ансат жанрсенчен чылайăшне кĕртме пултараççĕ. Кăткăс жанра кĕнĕ ансат жанрсем хăйсен малтанхи функцине çухатса çĕнĕ функци, кăткăс жанр содержанине пăхăнакан пĕлтерĕш илеççĕ.

Тĕслĕх вырăнне К.Ивановăн «Нарспи» поэминех илер. Унта юмăç пăхни, вĕрÿ-суру сăмахĕсем калани тĕл пулать. Халăх сăмахлăхĕнче уйрăммăн çÿренĕ чухне çак жанрсен тексчĕсене пурнăçри конкретлă çын шăпине пĕлес, ăна ăрăмласа парас тĕллевпе каланă пулĕччĕç. «Нарспире» вĕсен тĕллевĕ пурнăçри конкретлă çынсемпе пачах та çыхăнман, вĕсем поэт ÿкернĕ илемлĕ (сăнарлă) тĕнчери геройсен пурнăçĕ-шăпипе, унта сăнланă ĕçсемпе çыхăннă. Çапла майпа ансат жанрсем пуплевĕн кăткăс жанрĕсенче пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен тĕпрен улшăнаççĕ, илемлĕх функциллĕ пулса тăраççĕ.

«Сăмахлăх» (словесность) термин ăслăлăхра виçĕ пĕлтерĕшпе çÿрет:

1) халăх сăмахлăхĕ (устное творчество-фольклор); 2) устная словесность; 3) устный словарь, лексикон. Халăх сăмахлăхĕ тесе сăмах вĕççĕн çÿрекен пĕтĕм халăх идеалне тĕпе хурса йĕркеленĕ хайлавсене калаççĕ, (юмахсемпе халапсем, юрăсемпе такмаксем ...) вĕсен авторĕ паллă мар. «Литература» термин (В.Г.Белинский сăмахĕпе «изящная литература») XVIII ĕмĕрте вăтам ĕмĕрсенчи «поэзия», «поэтическое искусство» ăнлавсене хĕссе кăларса ăслăлăхра анлă сарăлма пуçланă. Хальхи вăхăтра литература тесе общество пĕлтерĕшлĕ çырулăх хайлавĕсене ка-

лаççĕ. Тĕпчевçĕсем литература ячĕпе ытларах «илемлĕ литература» çӳренине палăртаççĕ. Литература хăй темиçе тĕрлĕ пулни те паллă. Сăмахран, ăслăлăх, эпистолярлă, публицистикăлла, ял-хуçалăх, усă курнă (справка), классика, ача-пăча, чăваш, вырăс, илемлĕ литература т.ыт.те. Илемлĕ литература – искусствăн тĕп тĕсĕсенчен пĕри, сăмах искусстви. Илемлĕ литература – илем (эстетика) тĕнчи, пурнăçа ĕмĕтри илем витĕр ӳкерсе кăтартни. Вăл кăмăл-сипет, философипе социаллă пурнăç пуянлăхĕсене упрать, халăх сăмахлăхĕпе тачă çыхăнура тăрать, илемлĕх тĕнчине сăнарсем (герой, персонаж, прототип) пулăшнипе йĕркелет, обществăн, этемĕн пур енлĕ ĕçĕ-хĕлĕпе пурнăçне сăнлассине тĕпе хурать.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Мĕн вăл филологи? Унăн тĕпчев объекчĕ.
2. Мĕн вăл текст? Ăна тĕпчемелли майсем.
3. Сăмахлăх (словесность). Çырусăр сăмахлăх тĕсĕсем.
4. М.М.Бахтинăн пуплев жанрĕсем çинчен каланă ĕçĕ.
5. Литература тата илемлĕ литература.
6. Пĕр-пĕр чăваш романне кĕнĕ ансат жанрсене шыраса тупăр, вĕсен илемлĕх функцийĕсене палăртăр.

## Усă курмалли литература


Волков, И.Ф. Литература как вид художественного творчества /И.Ф. Волков.-М., 1985.

Бахтин, М.М. Проблема речевых жанров // Эстетика словесного творчества. / М.М. Бахтин.-М., 1979-С. 237-280 (Конспектлăр).

Рождественский, Ю.В. Введение в общую филологию /Ю.В. Рождественский. М., 1979.

«Литература». ЛЭС.-М., 1987.-С. 186-188 (Конспектлăр).

Сергеев, Л.П. Ĕç хучĕсем çырасси: практикум. / Л.П. Сергеев.-Шупашкар, 1992.

Энциклопедический словарь юного литературоведа. -М., 1998.-С.140-141.

### *III лекци*

## Литературăн культурăри тата ӳнерти вырăнĕ. Хайлавăн функциллĕ пурнăçĕ

Литература – анлă пĕлтерĕшпе каласан, пĕр-пĕр тĕллевпе çырнă тĕрлĕ жанрлă текстсен пĕрлĕхĕ, илемлĕ литература, публицистика, наука, законодательствăпа право, дипломати, техникăпа информаци, мифологипе культ произведенийĕсен йышĕ. Халăх сăмахлăхĕ илемлĕ литературăна çывăх, анчах та вăл çырулăхсăр та пурăнма пултарать пулсан, литература вара çырулăхсăр пулма пултараймасть. Халăх сăмахлăхĕн уйрăм жанр тĕсĕсем ăруран ăрăва сăмах вĕççĕн куçсах çирĕпленеççĕ, вĕсем халăх асĕнче çырулăхсăрах пурăнаççĕ.

Çын хăйĕн шухăш-ĕмĕчĕсемпе кăмăл туйăмне нумай ĕмĕрсем хушши искусствăра ӳкерсе кăтартма (тăрăшнă) хăнăхнă. Çавна пула (çыннăн сăнарлăхпа, илемлĕхпе сыхăннă ĕçĕ-хĕлĕн) искусствăн тĕрлĕ тĕсĕсем аталаннă: сăмах ӳнерĕ – илемлĕ литература, кĕвĕ-çемĕ ӳнерĕ – музыка, сăрă ӳнерĕ – живопись, архитектура, скульптура, ташă, театр, кино, фото, орнамент, графика... Кашни искусствăн пурнăçа сăнласа памалли, халăха тыткăнламалли хăйне тивĕçлĕ майсем пур. Сăмахран, музыка искусстви – кĕвĕллĕ сасăсемпе, ӳнер искусстви – тĕрлĕ сăрăсемпе ӳкернĕ картинăсемпе, скульптура – пысăк ăсталăхпа касса-ыраласа тунă илемлĕ кĕлеткесемпе т.ыт.те. Тĕрлĕ йышши искусствăсен хушшинче илемлĕ литература уйрăмах паллă вырăн йышăнать, вăл – сăмах искусстви. Çыравçăсем хайлавсенче сăрăран та, кĕвĕрен те хăватлăрах хатĕрпе – сăмахпа, этем калаçăвĕпе усă курса çыраççĕ. Çутçанталăк илемне ӳкерсе кăтартать-и, историре пулни çинчен çырать-и, паянхи çинчен каласа парать-и – пурпĕрех илемлĕ литературăра тĕп вырăнта çын, унăн чунĕ-кăмăлĕ, шухăшĕ-ĕмĕчĕ тухса тăрать. Илемлĕ литература халăх пурнăçĕпе таччăн çыхăнса тăрать.

Литературăн культурăри тата ӳнерти вырăнĕ пирки тĕпченин историйĕ вăрăм та пуян. Сăмахран, вăтам

ĕмĕрсенчи шухăшлавçă-тĕпчевçĕсем скульптура тата живопись искусствисене литературăран (поэзирен) ытларах хакланă. Французсен просветителĕ Ж.Б.Дюбо (XYIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурри) илемлĕ каласа панипе куçа курăнакан чăнлăха туйса илме çуккине палăртнă, çакна çитменлĕх пек курнă. Нимĕçсен писателĕ тата ученăйĕ-просветителĕ Г.Э.Лессинг «Лаокоон или о границах живописи и поэзии» (1766) ĕçĕнче илемлĕ сăмахлăх скульптурăпа живописçрен чылай çӳлерех пулнине палăртнă. Сăмахлăх ӳкерĕвĕн тĕп палли, унăн шухăшĕпе, каласа панинче, ĕç-пуç аталаннинче, сăнарсен вăхăтри тăсăмĕ çыравçă шухăшĕпе пĕр майлă килнинче, скульптурăпа живописçре япаласем талккăшра пĕр-пĕрин хыççăн курăннинче.

Искусствăн уйрăм тĕсĕсен хăй евĕрлĕхĕ пирки каярах Г.В.Ф.Гегель «Эстетика» ĕçĕнче тĕпчесе çырнă. Вăл та илемлĕ сăмахлăх (поэзи) илемлĕ пĕлтерĕве пĕлсе, туйса пынипе ытти искусствăсенчен çӳлерех, пуянрах пулнине палăртнă.

Çакна асра тытмалла: XIX ĕмĕрте поэзи тесе пĕтĕм илемлĕ литературăна каланă, поэзипе прозăна тĕпчевçĕсем XX ĕмĕрте тин уйăрса пăхма пуçланă.

Илем (эстетика) куçĕпе пăхсассăн литература (анлăрах – çырусăр тата çырullă сăмахлăх) ӳнерĕн (искусствăн) пĕр тĕсĕ пек курăнать. Культура куçĕпе пăхсан вара литература чун-чĕре культурин пĕр пысăк пайĕ пулни тавлашусăр. Ун пек чухне литературăпа халăх сăмахлăхне пĕрлештерсе **сăмахлă культура** теççĕ.

Литературăн культурăри вырăнĕ пирки каласнă чухне М.М.Бахтин литературоведăн шухăшне палăртмалла: «Литература – неотрывная часть культуры, ее нельзя понять вне целостного контекста всей культуры данной эпохи. Ее недопустимо обрывать от остальной культуры и, как это часто делается, непосредственно, так сказать, через голову культуры соотносить с социально-экономическими факторами» (Бахтин М.М. Ответ на вопрос редакции «Нового мира»// Эстетика словесного творчества. - М., 1979. - С.329).

4-42219

Пирĕн ăслăлăхра илемлĕ хайлаври пурнăҫа чăн пурнăҫри факторсемпе (социаллă, экономика, политика) танлаштарса пăхасси питĕ анлă сарăлнăччĕ. Ҫавна пулах, сăмахран, «Нарспире» пуянсемпе чухăнсен кĕрешĕвне шыранă, пĕрисене ырласа теприсене хурланă е питленĕ. Апла литературăна тĕпченĕ чухне ăна культура контекстĕнчен уйăрса пăхни тӳнтерле (тĕрĕс мар) ăнлантару патне илсе ҫитерет. Хайлаври конфликтсене, сюжет йĕрне, чылай чухне идея шайĕнчи содержание те чи малтан чăн пурнăҫра мар, культурăн тĕрлĕ вăхăтри сийĕсенче шырамалла. Тĕслĕхрен, «Нарспи» поэма сюжечĕ пĕлĕтрен татăлса анман, тĕрĕк халăхĕсен ҫавăн йышши сюжет пирĕн эрăн малтанхи пин ҫуллăхĕнчех йĕркеленнĕ. Малтан тĕрĕксен генеалогилле халапĕсен ҫапларах фабулăллă сюжет пулнă: йăх-ăруран пĕр хĕр арăм ҫеҫ чĕрĕ юлать, вăл ҫĕнĕ ҫĕре ҫитсе кашкăртан ача ҫуратать, йăха ҫĕнĕрен хунаттарса ярать. Каярах ҫак фабула тăшманран шыв (Атăл е урăх юхан шыв) урлă каҫса таракан ачаллă арăм ҫинчен калакан халапа йĕркелет. Кунта хĕр арăм йăха упраса хăвараканĕ. Юрăра ҫак сюжет тăшмана вăйпа качча панă хĕрĕн хӳхлевĕ пек. Унти хĕр – хăйне вăйпа тыткăнласа арăм тунине хирĕҫ тăракан чăваш. Каярахри юрăсенче (сюжетлă юрăсене пейĕтсем теҫҫĕ) хĕр тăшмана качча кайнишĕн ют халăх мар, хĕрĕн ашшĕ-амăшĕ айăплă пулнине палăртма пуҫлаҫҫĕ. Хĕре ашшĕ-амăшĕ вăйпа качча парать, хĕр хăйĕн шăпипе килĕшмесĕр шыва сиксе вилет. Турхан Яккăвĕн «Варуҫҫи» тата Константин Ивановăн «Нарспи» поэмисен сюжечĕсем культурăн тарăн тымарĕсенчен сĕткен илни курăнать.

М.М.Бахтин ҫак ыйту пирки ҫапла ҫырать: «Великие произведения литературы подготавливаются веками, в эпоху же их создания снимаются только зрелые плоды длительного и сложного процесса созревания» (Ҫавăнтах. С.331).

Хайлава культура контекстне лартса пăхни тĕпчевҫе хайлавăн шухăш тарăнăшне ăнлантарма пулăшать.

Хайлавăн функциллĕ пурнăçĕ (функционирование). Литературовед-тĕпчевçĕ А.А.Потебня хайлавăн функциллĕ пурнăçĕ пирки çакăн пек шухăш каланă: «Пĕрре ӳкернĕ сăнар художникрен уйрăлать, ăна пăхăнма пăрахать иккен, çавăнпа та çыравçă хăй тахçан çырнă хайлав çине автор пек мар, критик пек пăхать-мĕн» (Хрестоматия. С.435-436). Вăл автор–çынпа автор–художника уйăрса пăхни курăнать.

Хайлавăн функциллĕ пурнăçĕ (функционирование) пирки калаçнă чухне малтанах «çыравçă–хайлав–вулавçă» виç кĕтеслĕхĕн кăткăс çыхăнăвне ăнланма тăрăшмалла. Çыравçă илемлĕ пултарулăхра хăйĕн пулас вулавçине асра тытса та шута илсе çырать теççĕ («установка на определенный тип восприятия»). Çавăнпа та хайлава тĕпченĕ чухне çав «установка» текеннине тĕпе хурса ĕçлеме май пур пулмалла. Ку вăл çыравçăпа вулавçă хушшинчи çыхăну. Вулавçăпа хайлав хушшинчи çыхăну та пур теççĕ. Вулавçă вăл литература процесне хутшăнакан çын, вăл хайлава çырса пĕтерекенĕ. Кашни вулавçăн хăйĕн тĕнче курăмĕ, çавăнпа та кашниех хайлава хăйне май фантазилесе вĕçлет. Вулавçăн мĕн тери восприяти мехелĕ (потенциал восприятия) пиçĕрех, вăйлăрах, вăл çав таран пуянрах сăнарсем шухăшласа тупать.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Ӳнерĕн (искусствăн) ытти тĕсĕсенчен литература хăш енĕсемпе уйрăлса тăрать?
2. Литературăн культурăри вырăнĕ. Культура контекстĕнчи хайлав.
3. Хайлавăн функциллĕ пурнăçĕ, виçĕ кĕтеслĕх çыхăнăвĕ.
4. Г.Э.Лессинг «Лаокоон или о границах живописи и поэзии» (1766) ĕçĕ.
5. А.Г.Горнфельд «О толковании художественного произведения» ĕçĕ.
6. М.Науманăн «Введение в основные творческие и методологические проблемы» (1975) ĕçĕ.

## Усă курмалли литература

Введение в литературоведение: хрестоматия. – М., 1988.– С.44–53, С.322-326, С.429-464; –М., 1997.

Бахтин, М.М. Ответ на вопрос редакции «Нового мира» //Эстетика словесного творчества. – М., 1979. С.328–335.

Родионов, В.Г. Кĕрхи çăлтăр //Элкер Ç. Хурапа шурă. –Шупашкар, 1994.– 6 -20 с.

Родионов, В.Г. Чăваш литературипе паянхи вулавçă // Çамрăклăхпа ăсталăх: Çамрăк критиксем çырнă статьясен пуххи. – Шупашкар, 1982. – 118–127 с. (конспектлăр).

## *IV лекци*
## Хайлав пĕрлĕхĕ.
## Тишкерӳ тата интерпретаци ыйтăвĕсем

Ăслăлăх тĕлĕшĕнчен хайлав пĕрлĕхне тĕпчесси литературоведенишĕн йывăр ĕç шутланать. Ку ыйтăва татса парас тесе тĕрлĕ вăхăтри тĕпчевçĕсем эстетикăра, искусствознанире тата литературоведенинче тăтăшах хускатнă. Сăмахран, В.Г.Белинский каланă тăрăх, хайлавăн хăйĕн тĕнчи пур, çавăнпа та унăн уйрăм пайĕсене пĕтĕмĕшле пĕрлĕхе шута илмесĕр пăхма май çук. Л.Н.Толстой шухăшĕпе: 1) хайлав пĕрлĕхĕ сăнарсен пурнăçĕнче мар, автор позицийĕнче палăрать; 2) хайлавра тĕнче уйрăм шухăш мар, çыхăну; çакна сăнарсем, ĕç-хĕл урлă кăна ăнланма пулать. А.А.Потебня çырнинче: содеражание çыравçă мар, вулавçă тĕрĕсрех те, тĕплĕрех йĕркелет, хайлавăн тĕрĕс шухăшĕ патне çитет. А.П.Скафтымов тĕпченинче: 1) хайлав çинчен хайлав хăй кăна калама пултарать (черновиксем те, автор биографийĕ те мар); 2) хайлав пахалăхĕ куçарура чакать е тĕрлĕ витĕме пула куçаймасть; 3) хайлавра уйрăм сăмахсен те, сăнарсен те пĕрер пĕлтерĕш кăна. А.С.Бушмин шухăшĕпе вара хайлавра тĕпре сцеплени эффекчĕ (эффект сцепления).

М.М.Бахтин каланисем питех те кăткăс та пĕлтерĕшлĕ: 1) автор пĕр пĕтĕмĕшле хайлавра кăна курăнма пултарать: автор сăнарĕ – хайлав сăнарĕ, чăн-чăн авторĕ мар; 2) вулавçă идеаллă мар, вăл конкретлă вăхăтпа тата талккăшпа çыхăннă; 3) хайлава личноçе ăнланнă евĕр, тарăнăшне кура ăнланаççĕ (хаклаççĕ), «вулавçă–хайлав» хушшинчи дистанци палăрать; 4) хайлавăн улшăнакан пĕлтерĕшĕ пур, вăл Пысăк вăхăтра (Большое время) пурăнать. Хайлава конкретлă вăхăт картине хупни тĕпчеври çитменлĕх шутланать. Урăхла каласан, вăл е ку халăхăн культури пин-пин çул пуянланса пынине курмалла, хайлава тĕпченĕ чухне çав Пысăк вăхăта яланах асра тытмалла.

Д.С.Лихачевăн «Внутренний мир художественного произведения» ĕçĕ тĕпчевçĕсемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ, унта интерпретаци проблемине мала кăларса тăратнă. Илемлĕ хайлавăн: 1) шалти тĕнчи хăйĕн пĕр-пĕринпе çыхăннă саккунĕсемпе пурăнать («сывлать»), ăсчах каланă тăрăх, çыравçă хайлаври вăхăта та, талккăша та хăй шухăшласа тăвать; 2) психологи тĕнчи пур иккен, вăл кашни хайлавра тĕрлĕрен пулать; 3) социаллă тĕнче те пур, анчах та вăл чăн пурнăçрипе тӳр килсе пымасть; 4) истори те чăн пурнăçри пек мар, вăл хăй уйрăм тĕнче; 5) кăмăл-сипетĕн, несĕлĕн тĕнчи пур.

«В мире литературного произведения нет много из того, что есть в реальном мире. Это мир по своему ограниченный. Литература берет только некоторые явления реальности и затем их условно сокращает или расширяет, делает их более красочными или более блеклыми, стилистически их организует, но при этом ... создает собственную систему, систему внутренне замкнутую и обладающую собственными закономерностями» – тесе пĕтĕмлетет Д.С.Лихачев. Вăл çак ĕçре интерпретаци ыйтăвĕсене чылай çĕнĕлле хускатать, студентăн ку ĕçе тĕплĕн тишкермелле, конспектласа илмелле (Хрестоматия. С.194-198).

Хайлавăн форма элеменчĕсене çырса кăтартнине, вĕсен функцийĕсене палăртнине *тишкерӳ* (анализ) теççĕ. Хайлавăн шухăш енне, унăн содержанине ăнлантарнине

*интерпретаци* теççĕ. Д.С.Лихачев шухăшĕпе, интерпретаци – вăл литература ăслăлăхĕн тĕнĕлĕ: унăн тавра ытти дисциплинăсем вырнаçнă (Хрестоматия. С.198-200). Интерпретаци, пĕрремĕшĕнчен – илемлĕ пултарулăхлĕ, иккĕмĕшĕнчен – литература критикиллĕ, виççĕмĕшĕнчен – литература ăслăлăхлĕ пулма пултарать. Пĕрремĕшпе иккĕмĕшĕ ирĕклĕрех, вĕсенче эссе паллисем вăйлă, юлашки вара илемлĕ форма тишкерĕвĕ çине таянать, çавна май чăнлăха çывăхарах тăрать. Студентăн çакна асра тытмалла: илемлĕ сăнара логика шухăшлавĕпе пĕрпеклетме май çук, çапах та ăна логика шухăшлавĕн чĕлхи çине куçарма пулать (Хрестоматия. С.185-189). Çак ăнлав ӳнер искусствин теорийĕ тата герменевтика (ЛЭС. С.77) традицийĕсем çинче никĕсленнĕ. Раççей ăслăлăхĕнче ку енĕпе чи паллă герменевт М.М.Бахтин шутланать.

Илемлĕ хайлава урăхларах ăнлантаракансем тĕрлĕ шкулсене пĕрлешнĕ. Чи малтанах кунта форма тата структура шкулĕсене палăртмалла. Форма шкулĕ тĕпчевре илемлĕ формăна тĕпе хурать. Вăл формăна тĕпчесе содержание ăнланасшăн тăрăшмасть, материе формăланипе (çырас умĕнхи материе еплерех формăланине) сăнассине мала лартать. Кун пирки В.М.Жирмунский 1923 çулта «К вопросу о «формальном методе» ятлă ĕçре лайăх çырнă. ЛЭС-ран студентсен «Формальная школа», «Формальный метод» (С.473-474) статьясемпе паллашмалла.

Структура шкулĕ (структурализм) XX ĕмĕрĕн 40-50-мĕш çулсенче Францире çуралать. Пĕр вăхăтра Тарту университетĕнче вăйлăн аталанать, урăхла Тарту шкулĕ тесе те калаççĕ. Структура шкулĕ структура элеменчĕсенчен ытларах вĕсен хушшинчи хутшăнăва, çыхăнăва тĕпчессине мала лартать: «Выявление внутриструктурных связей, выделение уровней структуры произведения и установление иерархических связей между ними, наконец моделирование как отдельного текста, так и художественной структуры целых групп произведений, литературных направлений и даже эпох – все эти неотъемлемые от структурализма приемы и задачи

предполагают анализ *системы отношений* элементов, составляющих художественную целостность» (ЛЭС. С.426-427). Çавăнтанах «Структурализм», «Структурная поэтика», «Семиотика» ăнлавсене тĕплĕн тишкермелле.

Формăпа содеражание ку таранччен ăслăлăхра тĕрлĕрен ăнлантарнă. Пĕрисем хытса ларнă (уйрăм) япаласем пек ăнлантаратчĕç, халĕ вара темиçе элемент пĕр-пĕринпе яланах формăпа содержани хутшăнăвĕнче тăнине, пĕр элемент кĕçĕнреххишĕн содержани, аслăраххишĕн форма пулни çинчен çыраççĕ. Сăмахран, С.И.Кормилов хайлав элеменчĕсен диалектикăллă системи темиçе шайран (уровеньтен) тăни, аялти шайĕ çӳлереххишĕн форма, çӳлти вара – содержани пулни çинчен çирĕплетсе калать. Мĕн пурĕ 5 шай иккен. Чи аялти – автор пуплевĕ (авторская речь). Аялтан иккĕмĕш шай **илемлĕ пĕлтерӳ йĕркеленĕвĕ** (организация художественного сообщения). Илемлĕ пĕлтерӳ калу (повествование), драмăри ĕç-хĕл (драматические действия) тата лирикăлла палăрту (лирические выражения) формисемпе пулма пултарать. Кунтах М.М.Бахтин «икĕ сасăллă сăмахĕ» (двуголосое слово) те кĕрет. Ку шайра хайлав вăхăтневаскатса чарнине, талккăша улăштарнине те тĕпчеççĕ. Çак шай умĕнхишĕн содержани пулать. Аялтан виççĕмĕш шай **илемлĕ текст семантики** (семантика художественного текста) пулса тăрать. Г.Н.Поспелов ăна «предметная изобразительность» тет. Кунтах пейзаж, персонаж, вĕсен портречĕсем, сюжет, индивидуаллă пуплев кĕрет. Аялтан тăваттăмĕшĕ, çӳлтен иккĕмĕш шай **вăл тема содержанийĕ**. Илемлĕ характерсемпе обстоятельствăсем, фабула кĕреççĕ кунта. Аялтан пиллĕкмĕш, çӳлтен вара пĕрремĕш шай вăл **идейăпа эстетика содержанийĕ**. Кунта И.Ф.Волков тĕпчевçĕ палăртнă илемлĕ содержани типĕсем кĕреççĕ: героика, трагизм, сентиментализм, драматизм т.ыт.те (Волков И.Ф. Теория литературы. М., 1995). Илемлĕ текст семантики шайĕ «пĕтĕмĕшле» формăран (вĕсем пурте аяларах тăраççĕ) «пĕтĕмĕшле» содержание куçмалли кĕпер. Приключенилле прозăри чи çӳлти шай – текст семантики.

Кирек мĕнле илемлĕ произведение тишкернĕ чухне те тĕпчевçĕсем вĕсене тĕрлĕ енчен пăхса хакласçĕ. Çавна май хайлава тишкерес мелсем те тĕрлĕ пуласçĕ. Сăмахран, социологилле тишкерÿ, эстетикăлла тишкерÿ, социологилле-эстетикăлла тишкерÿ.

*Социологилле тишкерÿре* тĕпчевçĕ произведение ытларах унăн идейăлла содержанийĕ енчен тĕпчет. Мĕнле проблема лартнă писатель произведенире, геройсем мĕншĕн кĕрешеççĕ, вĕсене мĕнле кăтартнă? Вĕсен пурнăç позицийĕ, характерĕ, хайлаври конфликт, вăл мĕнле вĕçленни.

*Эстетикăлла тишкерÿ* литература историйĕн конкретлă ыйтăвĕсемпе çыхăннă. Тĕслĕхрен, А.Артемьевăн «Саламби» повеçĕнчи сăнарлă деталь. Паллах, кунта илемлĕх мелĕсем çинче чарăнса тăмалла. Деталь – илемлĕх мелĕн уйрăлми пайĕ, элеменчĕ. Вăл произведенири сăнара уçса парассипе çыхăннă: 1) повеçри сăнарсем, вĕсен портречĕ; 2) геройсен шалти тĕнчи, шухăшкăмăлĕ. Вĕсене хупăрласа тăракан япаласем. Çутçанталăк сăнарĕ. Портрета тумалли мелсем (танлаштару, эпитет, метафора, тропсем, символла сăнарлă детальсем, т.ыт.те).

*Социологилле-эстетикăлла тишкерÿ* икĕ тĕрлĕ меле пĕрлештерсе тăрать, идейăпа илемлĕх тытăмне те уçса парать. Сăмахран, А.Артемьевăн «Саламби» повеçĕнчи Саламби сăнарĕ. Хайлавăн тĕп шухăшĕ кунта – чăваш çамрăкĕсен 1950 çулсенчи сăн-сăпатне кăтартасси, вĕсен чун тасалăхне, таса юратăвне сăнласа парасси. Вĕсем ĕçчен те çирĕп чунлă, ырă кăмăллă. Геройсен çак чун пахалăхне мĕнле кăтартать-ха писатель? Характерăн ырă енĕсене мĕнле уçса парать? Тĕслĕхрен, Саламби характерне? Символла сăнарсемпе (хирти пĕччен йывăç, йĕлтĕр йĕрри), лирикăлла çаврăмсемпе, шалти монологсемпе, писатель хăй кăмăл-туйăмне палăртнипе, сăнарлă, психологиллĕ детальсемпе, тĕрлĕ илемлĕх мелĕсемпе т.ыт.те. Çакнашкал тишкерÿ тĕслĕхĕсене Г.Я.Хлебников кĕнекинче (Чăваш совет литератури. Шупашкар, 1972. 383-387 с.) курма пулать.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Хайлав пĕрлĕхĕ çинчен А.А.Потебня, А.П.Скафтымов, А.С.Бушмин мĕн çырнă?
2. М.М.Бахтинăн «К методологии литературоведения» ĕçĕ.
3. Д.С.Лихачевăн «Внутренний мир художественного произведения» ĕçĕ.
4. Интерпретаци, унăн тĕсĕсем. Герменевтика.
5. Форма шкулĕ.
6. Структура шкулĕ.
7. Мĕн вăл форма тата содержани? Хайлав элеменчĕсен системин пилĕк шайĕ.
8. Тишкерӳ мелĕсем.

## Усă курмалли литература


Введение в литературоведение: хрестоматия. – М., 1988.– С.167-208; –М., 1997. – С.97-102, С.333-334.

Хализев, В.Е. Теория литературы /В.Е. Хализев. -М., 1999.– С.36-42.

Кормилов, С.И. Теоретическая система Г.Н.Поспелова и проблема современной системы теоретико-литературных понятий // Вестн. Моск.ун-та. Сер.9. Филология. 1995. № 3.– С.5-19.

Жирмунский, В.М. К вопросу о «формальном методе» // Теория литературы: Поэтика. Стилистика. -Л., 1977.– С.103-106.

Волков, И.Ф. Теория литературы /И.Ф. Волков.– М., 1995.– С.39-75, 101-127.

Чернец, Л.В. Литературное произведение как художественное единство // Введение в литературоведение: учеб.пособие. - М., 2000.– С.153-176.

Степанов, В.А. Анализ художественных произведений в национальной школе /В.А. Степанов. -Чебоксары, 2000. - С.45-57.

## *V лекци*
## Лирика. Лирика речĕ. Лирика геройĕ. Тема сăнарĕ. Мотив

Ку таранчеен ытларах проза тишкерĕвĕ çинчен каласнă, поэзи тишкерĕвне сăвă-хывăм ыйтăвĕсене пăхса тухнă чухне çеç кăштах хускатнă. Поэзи (лирика), проза тата драма тишкерĕвĕсем пĕр-пĕринчен чылай уйрăлса тăраççĕ.

Мĕн вăл лирика? *Лирика* – литературăн виçĕ ĕретĕнчен пĕри; лирика хайлавĕ пурнăçа е çут çанталăка авторăн чун-чĕри хумханăвĕнчен тухакан шухăш-туйăм урлă сăнласа парать. Лирикăра малта объект мар, калу субъекчĕ (субъект высказывания) тата вăл ӳкерĕннĕ япала çине еплерех пăхни (отношение к изображаемому). «Лирика есть в конечном счете воплощение, воссоздание непосредственных личных переживаний автора» – тет В.В.Кожинов. Çавах та лирикăлла «эпĕ» (лирика геройĕ) вăл яланах поэт сăнарĕпе тӳр килмест.

Лирика несĕлĕ (речĕ) виçĕ жанр ушкăнĕ çине пайланать: çĕкленӳллĕ, тиркевлĕ тата пусăрăнчăк. Çĕкленӳллĕ лирикăн жанр тĕсĕсем: ода, гимн, марш..; тиркевлĕ лирикăн: такмак, пароди, эпиграмма..; пусăрăнчăк лирикăн – элеги, романс, серенада т.ыт.те.

Лирикăна прозăпа драмăран уйăракан паллăсемпе енсем:

1) прозăри çынсен, сăнарсен тĕнчи авторăннинчен чылай уйрăм тăрать пулсан, поэзи тĕнчи поэтăннипе питех те çывăх;

2) лирикăра прозăри пек пурнăç тĕнчине, илемлĕ тĕнчене тарăннăн кăтартни çук, унти илемлĕ чăнлăха (художественная реальность) сăвă компоненчĕсен (çемĕ–ритм, састаш–рифма, интонаципе синтаксис повторĕсем т.ыт.те) системи–пĕрлĕхĕ тăвать;

3) лирикăри кашни туйăм, кашни характер типлă, пĕтĕмлетӳллĕ пулса тăрать, мĕн пур сăнарсем автор сăнарне (автора хăйне мар!) пăхăнса çураçăнаççĕ. Автор

сăнарне тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен терминпа палăртаççĕ: лирикăллă «эпĕ», «лирика персонажĕ», «лирика геройĕ», субъект, т.ыт.те.

Л.Я.Гинзбург «О лирике» ĕçĕнче калана тăрăх, лирика хăй евĕрлĕхĕ унти сăнар автор хăй пулнинче кăна мар, хайлавăн эстетика структурине унăн пĕр элеменчĕ субъект пулса кĕнинче. Лирика литературăн чи субъективлă несĕлĕ, çав хушăрах вăл пурнăçа пĕтĕмĕшле ўкерсе, сăнарласа кăтартма тăрăшать. Апла лирикăра пайăр çын шăпи, унăн туйăмĕ валли вырăн çук. Вулавçă лирикăпа паллашсан хăйĕн е паллакансен пурнăçĕпе çыхăнтарса та çывăхлатса пăхаймасть пулсан, унта çырнипе «хыпса çунмасан» лирика хăйĕн тĕллевне пурнăçлаймасть.

Поэзире пулса иртнине уйрăм çынна пĕлтересси мар, нумай-нумай çынна каланин пĕлтерĕшне (смысл высказывания) уçса парасси, сăнласа туйтарасси лирикăра тĕп вырăн йышăнать. Сăмахран, халăх сăмахлăхĕнчи «шăнкăр-шăнкăр шыв юхать» юрра аса илсен малтанхи çаврари «чул» сăнарĕ «çын ĕмĕрĕ – çутă тĕнче (кун)» çыхăну çинчен, вĕçсĕрлĕхпе самантлăх, ĕмĕрлĕхпе пĕр кунлăх çинчен шухăша путарать.

Поэтсем хăйсен сăввисене конкретлă çынна халаллаunion та чылай чухне инициалсене кăна лартаççĕ. Тепĕр чухне сăвăри сăнарсен ячĕсене ят ылмашĕсемпе палăртаççĕ: «Эпĕ», «Эсĕ», «Вăл».

*Лирика геройĕ* сăвăри чи пĕлтерĕшлĕ, ыттисене пăхăнтаракан, йĕркелекен сăнар. Ун урлă эпир унăн тĕнче туйăмĕпе курăмне, илем туйăмне пĕлме, поэтăн пурнăçри позицийĕ пирки калаçма пултаратпăр. Лирика тĕнчине поэт лирика геройĕн маскине тăхăнса кĕрет, унти тĕнче тытăмне йĕркелет. Çавăнпа та лирикăра илемлĕ тĕнче çук тени тĕрĕсех мар, çав тĕнчене пĕр сăвăра туллин курма çук, ăнланас тесен поэтăн чылай сăввипе паллашмалла, тишкермелле. Лирика тĕнчинче автор сăнарĕн (лирика геройĕн) хăйĕн вырăнĕ пур. Вăл сăнар – типизациленĕ çын сăнарĕ. Поэт хăйĕн чун пăлханăвне ытти çынсен чун пăлханăвĕ шайне çĕклесе пĕтĕмлетет.

Лирика сăнарĕ темиçе тĕрлĕ сăнартан тăрать. Чи тĕпри – лирика геройĕ, ун хыççăн тема сăнарне палăртмалла, мотив текен компонента та, сăмах сăнарне те асра тытмалла.

***Тема сăнарĕ*** (тематический образ) тесе лирикăра туйăмпа қаланă шухăша палăртаççĕ («чувствуемая мысль» тенĕ В.Маяковский). Лирикăра ӳкернĕ е туйтарнă япаласем хăйсемшĕн кăна тĕл пулаççĕ, вĕсем урлă поэт ассоциаци речĕ, шухăшпа туйăм çуратать.

Тема сăнарĕ тума лирика пуçламăшĕ те нумай пулăшать. Вăл вулавçа сăввăн эмоци юхăмне кĕртсе ярса, хăйне евĕр «ĕненӳ» (настрой) тăвать. Тема сăнарĕсем виçĕ тĕп композици типĕпе йĕркеленсе аталанаççĕ: 1) пĕр-пĕрне витĕм кӳрекен икĕ сăнара танлаштарнипе (тĕрлĕ тропсемпе усă курни те çакăнта кĕрет); 2) пĕр тĕп сăнара аталантарса улăштарнипе (сюжетлă сăвăсен тытăмĕ те çапларах); 3) логикăлла шухăшлавпа (ытларах философиллĕ сăвăсенче тĕл пулать).

***Мотив*** тесе литература тексчĕн çирĕпленсе ларнă формăпа содержани компонентне калаççĕ. Чылай чухне унăн чиккине палăртса та çитермеççĕ: е вăл темăпа пĕрлешсе каять, е унпа анлăрах ăнлавсене палăртнă çĕрте усă кураççĕ. Сăмахран, социаллă мотив, политика мотивĕ, юрату мотивĕ т.ыт.те. Мотива автор личноçĕпе, унăн тĕнче тĕмсĕлĕвĕпе (миросозерцание), хайлавăн пĕтĕмĕшле структурине тишкернипе çыхăнтарса пăхаççĕ.

Мотивпа тема тĕрлĕ япаласем, студентăн вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма пĕлмелле. Тема абстракциллĕ ăнлавсемпе çыхăннă: пурнăçпа вилĕм теми, шăпа теми, кĕрешӳ теми т.ыт.те. Мотив вара текстра яланах уйрăм сăмаххăн çӳрет. Вăл поэтăн хăй евĕрлĕ илемлĕ ăнне (художественное сознание), унăн хăй евĕрлĕ поэтика системине палăртма пулăшать.

Тĕслĕхрен, Ç.Мишшин «Инçе çинçе уйра уяр» сăввине пăхар. Унта «Уяр», «Çĕн сывлăш», «Çĕн Кун», «чĕре» символла – метафорăлла мотивсем пур. Темăсем вара уйрăм сăмахăн ӳкерĕнмен: «çĕнелӳ теми», «пĕрлĕхлĕх теми».

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Мĕн вăл лирика? Лирика жанрĕн ушкăнĕсемпе жанр тĕсĕсем.

2. Лирикăна прозăпа драмăран уйăракан паллăсемпе енсем.

3. Лирика геройĕ.

4. Тема сăнарĕ, унăн виçĕ композици типĕ (В.Е.Холшевниковăн «Анализ композиции лирического стихотворения» ĕçĕ тăрăх).

5. Лирикăри мотив. Ç.Мишшин «Тинĕсе» сăввинчи мотивсемпе темăсем.

## Усă курмалли литература


Кожинов, В.В. Стихи и поэзия /В.В. Кожинов.- М., 1980.

Тимофеев, Л.И. Основы теории литературы / Л.И. Тимофеев.-М., 1976.- С. 273-277, 366-369.

Гинзбург, Л.Я. О лирике: хрестоматия.-М., 1997. -С.75-78, 233-224.

Холшевников, В.Е. Анализ композиции лирического стихотворения //Анализ одного стихотворения.-Л., 1985. -С.9-28 (композиционные типы тематического образа).

Хализев, В.Е. Лирика. Бройтман, С.Н. Лирический субъект. Целкова А.Н. Мотив //Введение в литературоведение: учеб.пособие.-М., 2000.-С.133-140, 141-152, 202-208.

Степанов, В.А. Анализ художественных произведений в национальной школе /В.А. Степанов.-Чебоксары, 2000.-С.240-256.

Федотов, О.И. Введение в литературоведение / О.И. Федотов.-М., 1998.-С.118-120.

Мещерякова М. Литература в таблицах и схемах /М. Мещерякова.-М., 2000-С.18-24.

Метин, П.Н. Лирика вăрттăнлăхĕсем /П.Н. Метин.- Шупашкар., 2005.-146 с.

Мысль, вооруженная рифмами. Поэтическая антология по истории русского стиха / сост., автор ст. и прим. В.Е. Холшевников.-Л., 1984. – 448 с.

## *VI лекци*

## Лирикăри сăнар речĕ. Сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшсем (тропсем)

Лирикăра (сăвăра) тĕрлĕ элемент речĕсем пур: 1) логика ăнлавĕн, 2) сăнарăн, 3) эмоцин, 4) çемĕпе сасăн. Логика ăнлавĕн речĕ (кунта лирика геройĕн типне, характерне, вăл социаллă пурнăçпа еплерех çыхăннине, тема сăнарне, тĕрлĕ темăсемпе мотивсене кĕртме пулать) сăнар речĕшĕн содержани, сăнар речĕ вара пĕрремĕшĕшĕн форма пулать. Малалла та çаплах: умĕнчи хыçалтишĕн содержани, хыçалти умĕнчишĕн – форма. Çапах та пĕтĕмĕшле содержани блокĕ те пур, унта логика ăнлавĕн речĕпе сăнар речĕ кĕреççĕ. Форма блокне эмоци речĕпе çемĕ тата сасă речĕ йĕркелеççĕ. Паллах, çакă тĕпчевçĕ сăвва анатомилесе пăхни çеç, чăннипе çав тăватă рет пĕр-пĕринпе çыхăннă, пĕри тепринсĕр пулма пултараймасть. Çавна май сăмахсем шухăш, сăнар, эмоци, çемĕпе сасă йĕркеленĕ çĕре хутшăнаççĕ. Сăвă йĕркисенчи сăмахсем, прозăрипе танлаштарсан, питех те çăтă-çăтă, тăвăр, тулă кĕлти пек тăпăл-тăпăл. Прозăра сăмахсем çăра мар, ирĕклĕ вырнаçнă, вĕсене чăвашла сĕлĕ лăпăш-лапăш кĕлтипе танлаштарма пулать. Лирикăри çак пулăма Ю.Тынянов «сăвă речĕн тăвăрлăхĕ» (теснота стихового ряда) тенĕ. Сăвăри «тăвăрлăха» тума сăмахсен шалти формипе семантики, сăмахсем юнашар тăнипе çĕнĕ сăнар е ассоциаци йĕркеленни те пулăшать.

Кирек мĕнле произведенин те, кирек мĕнле калаçăвăн та тĕп материалĕ – сăмах. Вăл писателе те, публициста та, ăслăлăхçа та, оратора та кирлĕ. Сăмахăн тӳрем пĕлтерĕшĕсĕр пуçне нумай енлĕ те пуян шухăш тĕсĕсем чылай, çавăнпа та сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ. Çакă вăл пĕр-пĕр сăмах пĕлтерекен япалан тĕрлĕ енĕсем е паллисем пурринчен килет. Сăмахран, Н.И.Ашмаринăн чăваш сăмахĕсен кĕнекине пăхсан, эпир унти сăмахсем нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине аван курат-

пăр. Тĕслĕхрен, *«ту»* сăмахăн словарьте 50 пĕлтерĕш ытла, *«çавăр»* сăмахăн 40 пĕлтерĕшне кăтартнă. Апла сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхĕ куç кĕрет. Çав енсемпе паллăсем сăмаха тĕрлĕ контекстра тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ тăваççĕ. Сăмаха хăш пĕлтерĕшпе каланине тĕрĕс ăнланма контекст (сăмахсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса калакан текст) пулăшать. Тĕслĕхшĕн, «курка» сăмаха илер-ха. Пурнăçра çак сăмах яланах конкретлă текстра тĕл пулать. «Пушă курка» тесен эпир пĕр майлă ăнланатпăр, «тăм курка» е «ӳпĕнчĕк курка» тесен сăмахăн татах та урăхларах енĕсем палăраççĕ.

Писательсем илемлĕ хайлавсенче сăмахăн нумай тĕрлĕ пĕлтерĕшĕсемпе усă кураççĕ, унсăр пуçне, сăмахсен пĕлтерĕшĕсене чылай аслăлатма пултараççĕ. Вĕсене çĕнĕ пĕлтерĕшсем тата пĕлтерĕш сĕмĕсем параççĕ. Сăмахран, П.Хусанкай поэт сăмахăн куçăмлă сăнарлăхĕпе тухăçлă усă курма пултарать. Вăл «уйăх» сăмаха еплерех сăнарсемпе туйăмсем «вĕрсе кĕртме» пултарнине пăхса тухар. «Суйласа илнисем» (Ш., 1968) кĕнекере эпир çапларах йĕркесем асăрхарăмăр: 1) Вак ĕшнеллĕ лăпкă вăрмана/Эс кĕретĕн уйăх хăпарсан...); 2) Тин тунă уйăх ылтăн пулă евĕр/Чăмать сайралнă пĕлĕт хушшине...; 3) Тулли уйăх – лирика çулĕ куçĕ – Ак каллех сана аса илтерет...; 4) Тинĕсрен тухать çур уйăх/Парăс евĕр карăнса...; 5) Уйăх çак каç асамăç...; 6) Уйăхран эп ыйтрăм: ма эс уйăх / Тĕксĕмленнĕ тивĕççĕр?–тесе...; 7) Уйăх пире сыхлать-тĕр/ Халь юнама вăл хатĕр...; 8) Сар çӳпçе пек тулли уйăх/ Тухрĕ Тукасран...; 9) Кулать иккен пиртен çак çут çанталăк/ Хĕвелĕ, уйăхĕ – йăлтах кулать...

Çапла вара сăвăç уйăха тĕрлĕ самантсенче (сăвăсенче) тĕрлĕрен курать, кашнинчех çĕнĕ сăнар тума пултарать. Сăнарĕ эмоци речĕпе килĕшӳллĕ те çураçуллă.

Тĕпчевçĕсенчен пĕрисем тропсенче куçăмлă пĕлтерĕш çуралать теççĕ, теприсем çакна хирĕçлеççĕ. Вĕсем тропсене фигурăсен ретне лартса пăхаççĕ, пĕлтерĕш куçмасть, çĕнĕлле ăнлану (переосмысление) пулса иртет тесе çирĕплетеççĕ. Тропсемпе фигурăсене илемлĕ шу-

хăшлав мелĕсем тесе шутлаççĕ. Вĕсемпе халăх сăмахлăхĕнче те, илемлĕ литературăра та, пуринчен ытла поэзире анлăн усă кураççĕ. Троп – сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшĕпе усă курни, сăнарлă шухăш пайрăмĕ, илемлĕ пуплев çаврăмĕ.

Поэтсем еплерех тропсемпе усă курни вĕсен индивидуаллă стилĕнчен те килет. Енчен те метафора поэтăн ассоциаци речĕн сăнар пуянлăхĕсене кăтартать пулсассăн, эпитет вăл – поэтăн хăй евĕрлĕх паспорчĕ, художник ăсталăхĕн чи çӳлти пусми.

Лев Озеров поэт тата куçаруçă каланă тăрăх, çамрăклăх метафорăна юрататать. Çамрăк поэт сăввин композицине метафорăна пăхăнса йĕркелет. Чăн та, çамрăк Çеçпĕлĕн сăввисем метафорăпа тулса ларнă, вĕсен техĕмĕ – метафорăра. Эпитета çитĕнсе çитнĕ вăхăтпа танлаштарма пулать. Вăл метафорăна хĕссе кăлармасса та пултарать. Çапах та çулĕсем иртнĕçемĕн поэт ытларах та ытларах эпитет енне туртăнать. Л.Озеров асăрханине ĕненсен, эпитет уйрăм поэт çеç мар, илемлĕ литература пиçсе çитнине те аван кăтартать.

Çапла вара тропсем индивидуаллă стиле те, литературăн пиçĕлĕхĕпе ӳсĕмне те тĕрĕс палăртма пулăшаççĕ темелле. Кунта тăтăшлăх словарĕ (частотный словарь) туни те пысăк усă памалла. Сăвăри сăмахсем çĕнĕ пĕлтерĕш çуратаççĕ, юнашар тăракан сăмахсемпе «çапăнса» сăнарлăх, туйăм вăйĕ йĕркелеççĕ. Ку тĕлĕшпе чăваш филологи ăслăлăхĕнче А.П.Хусанкайăн Çеçпĕл Мишши сăввисен тăтăшлăх словарьне туса панă хăшпĕр семантика ăнлантарăвĕ ĕçне палăртмалла.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Лирикăри сăнар речĕ. Хăш ретшĕн вăл содержани, хăш ретшĕн форма?

2. Сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхĕ. Çеçпĕл Мишшин сăввисенчи сăмахсен çĕнĕ семантикисене асăнса тухăр (А.П.Хусанкай ĕçĕ тăрăх).

3. Тропсем тата вĕсен функцийĕ.

4. Çеçпĕл Мишшин метафорисемпе эпитечĕсем.

5. Г.И.Федоровăн «Чăваш литературин сăнарлă пуплев теорийĕ (Ш., 1994) кĕнекерен студентсен çак тропсемпе фигурăсене ăнлантарнине çырса илмелле: метоними, танлаштару, метафора, синекдоха, перифраз, эпитет, символ, аллегори, иронипе сарказм, гиперболăпа литота, сăпатлантару (олицетворение), антитеза, оксюморон. Уйрăмшарăн тишкерсе тухмалла, тĕслĕхсем тупмалла.

## Усă курмалли литература


Тимофеев, Л.И. Основы теории литературы / Л.И. Тимофеев. - М., 1976. - С. 209-228.

Федоров, Г.И. Чăваш литературин сăнарлă пуплев теорийĕ /Г.И. Федоров. - Шупашкар, 1994. - С. 33-50.

Озеров, Л.А. Стих и стиль: записки поэта / Л.А. Озеров. - М., 1975.

От метафоры к эпитету // Озеров Л.А. Необходимость прекрасного. - М., 1983.

Хузангай, А.П. Опыт семантической интерпретации некоторых характеристик частного словаря поэтических текстов М.Сеспеля // Чувашский язык: история и современность: сб. науч. ст. / ЧГИГН. - Чебоксары, 1994. - С. 29-42.

Клинг, О.А. Тропы//Введение в литературоведение: учеб. пособие / О.А. Клинг. - М., 2000. - С. 432-445.

Хализев, В.Е. Теория литературы / В.Е. Хализев. - М., 1999. - С. 308-316.


## *VII лекци*

## Лирика речĕ. Сăвă элеменчĕсен çыхăнăвĕ. Лирикăри эмоци речĕ

XIX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче нимĕç философĕ Г.Гегель Европа эстетикинче пуçтарăннă идейăсене системăласа литература хайлавĕсене виçĕ ушкăна (рете) уйăрнă; эпикăлла, драмăлла тата лирикăлла. Лирикăлла хайлавсенче тĕпре – автор сăнарĕ, лирика геройĕн вы-

рăнĕ вара автор сăнарĕн шалти тĕнчинче палăрать. Гегель лирика тĕнчине «переживание и страсти сердца и духа» (куляну тата чун-чĕре алхасăвĕ) тесе палăртать.

В.Г.Белинский нимĕç философĕн идеисене аталантарса лирикăлла поэзи тĕнчи пирки çапла çырнă: «внутреннее выражение самого поэта» (поэт хăйĕн шалти кăмăл-туйăмне палăртни).

Лирика кулленхи пурнăçри, искусствăри вăрттăн кулянусене, шалти туйăмсене палăртнинче сисĕнет. Анчах та пĕтĕм куляну лирика пулмасть. Шухăш-туйăма палăртни илемлĕх тĕлĕшĕнчен лирика формипе калăпланса пымалла: сасăпа сăмахсен повторĕнче, çемĕпе интонацинче. Лирика (сăвă) – ритмлă (çемĕллĕ), мерăллă (виçеллĕ), рифмăллă (састашлă), музыкăна (кĕвве) çывăх пулмалла. Çав гармонире çыннăн (автор сăнарĕн, лирика геройĕн) шалти чунĕнче мĕн пулса иртни палăрмалла. Сăввăн кĕвĕлĕхĕ лирикăн чи пĕлтерĕшлĕ компоненчĕ пулса тăрать.

Куляну (переживание) вăл уйрăм опытăн психика феноменĕ. Çав хушăрах уйрăм çын кулянăвне пурте ăнланма пултараççĕ, вăл пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ. Апла лирика, уйрăм куляну пулсан та, объективлă, общество пĕлтерĕшлĕ пулăмсене çутатать, çав хушăрах кашни вулавçăн чĕринчи хĕлĕхĕсене сĕртĕнсе хускатма пултарать. Ӳнерти çавăн евĕр пулăмсене каласа пама май çук пулĕ, вĕсене сăнласа-ӳкерсе, сăрласа кăтартма кăна пулать. Çапла май куляну – форма сăнар речĕн шайĕнче содержани илет. Форма содержанисĕр пулайман пекех, куляну та сăнарсăр вулавçă патне çитеймест.

Илемлĕ сăнарăн тĕп пахалăхĕ – *нумай пĕлтерĕшлĕх* (многозначность). Сăмахра та, сăнарта та чылай шухăш. Вулавçă çав нумай идейăран пĕрне уйрăммăн суйласа илмест, вĕсем ун патне пĕр харăсах çитеççĕ. Çав нумай пĕлтерĕшлĕхе пĕр самантра, пĕр харăсах йышăнни *уçăмсăрлăх* (неопределенность) çуратать. Ахальтен мар Н.И.Ашмарин тĕпчевçĕ чăваш юрă сăмахĕсенче «тĕтрелĕх», «уçăмсăрлăх» тĕпре пулнине «Декаденты Запада и поэзия инородцев» очеркĕнче палăртать.

Уҫӑмсӑрлӑха тӗпе хунӑ тепӗр жанрта – детективра – сюжет ялан тенӗ пекех пӗр евӗрлӗ аталанать. Унта харӑсах темиҫе ҫынна шанмасӑр пулас айӑплӑ ҫын вырӑнне лартаҫҫӗ. Ҫакӑн евӗрлӗ ситуаци эстетика шайӗнчи кӗтнӗ эффекта (эстетический эффект ожидания) вӑйлатма пулӑшать. Вулавҫӑ айӑплине тупасса кӗтет, ҫав хушӑрах кунта нимӗнле уҫӑмлӑх та ҫук. Ҫав ситуацие «уҫӑмсӑрлӑх условийӗнче кӗтни» теме май пур. Уҫӑмсӑрлӑха туйни эстетика реакцине вӑратать.

Уҫӑмлӑх – реализм ӳнерӗн тӗп енӗ. Модернистсемпе псевдоноваторсем туйӑм юхӑмне (поток ощущений), сисӗме, ассоциаци хаосне (арпашӑвне) мала лартаҫҫӗ. Паллах, реализм ӳнерӗнче те ассоциаци хаосӗ ҫук мар. Пур вӑл, анчах та виҫесӗр те чикӗсӗр мар, арпашу унта хӑвӑртрах йӗркеленет.

Лирикӑра форма элеменчӗсем пӗр-пӗринпе хутшӑнса уҫӑмсӑрлӑх условийӗнче кӗтнин туйӑмне вӑратаҫҫӗ, ҫак «детектив эффекчӗ» *уҫӑмсӑрлӑх эмоцине* (эмоция неопределенности) ҫуратать. Уҫӑмсӑрлӑх эмоцине сӑвӑ ҫемми те, састаш та, интонаци те йӗркелеҫҫӗ. Ҫемӗ шайӗнче уҫӑмсӑрлӑха пусӑмлӑ тата пусӑмсӑр сыпӑксен черетленӗвне кӗтни тӑвать (силлабо-тоникӑра).

Уҫӑмсӑрлӑх эмоцине сӑвӑри монотони те тума пултарать. Монотоние вара асамлӑ нумай пӗлтерӗшлӗх тӑвать. Интонацин пӗр евӗрлӗхӗ сӑмахӑн конкретлӑ пӗлтерӗшне тӗссӗрлетет, нумай пӗлтерӗшлӗх тӑвать. Ҫакӑн евӗр интонаципе чиркӳ ӗҫченӗсем тӗрлӗ кӗлӗ калана чухне усӑ кураҫҫӗ.

Интонаципе акцентӑн уҫӑмсӑрлӑх вӑййи условийӗнче ҫемӗ кӗтни эмоци уҫӑмсӑрлӑхне тӑвать. Састаш кӗтнӗ чухне те эмоци уҫӑмсӑрлӑхӗ ҫуралать. Ҫапла вара эмоци ретне унӑн форми – сӑвӑ элеменчӗсем – йӗркелет. Эмоци сӑвӑра пачах та ҫук: ҫав рет вулавҫӑ пуҫӗнче, ӑсӗнче, чӗрипе чунӗнче йӗркеленет. Ӑна вулавҫӑ сӑвва вуланӑ май ҫемме, састаша, интонацие, сасӑ повторӗсене «реализацилесе», илтӗнтерсе ҫукран пур туса хурать.

Эмоци уҫӑмсӑрлӑхӗпе сӑмах (сӑнар) пӗлтерӗшӗн нумай енлӗхӗ вулавҫӑ пуҫӗпе чӗринче пӗр харӑс ҫуталса

илеççĕ, çапла майпа содержаниллĕ туйăмпа шухăшăнлав пĕрлешсе сăнарлă шухăш çуратаççĕ. «Эстетические эмоции находят свое разрешение не в элементах формы, а в образе. Они растворяются в образе (через неопределенность). Поэтому образующая эти эмоции форма самоуничтожается», – çырать Д.П.Ильин. Урăхла каласан, эмоцин «тулса тăкăнмалла», лăплану патне çитмелле. Сăнар урлă эмоци хăйне хăй «лăплантарать», пĕтерет те. «Эмоция есть побудительный мотив к созданию, стремления к стабильности и успокоенности», – тет Д.П.Ильин.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Куляну тата сăнар-формăпа содержани пĕрлĕхĕ.
2. Нумай пĕлтерĕшлĕх тата уçăмсăрлăх.
3. Мĕн вăл «детектив эффекчĕ», е «уçăмсăрлăх условийĕнче кĕтни»?
4. Эмоци уçăмсăрлăхĕ.
5. «Эмоци сăнарпа пĕрлешнĕ хыççăн чакса лăпланать» тенине пĕр-пĕр тĕслĕхпе çирĕплетсе парăр.

## Усă курмалли литература

Ильин, Д.П. Эстетический феномен в поэзии: Анализ лирики // Контекст. 1986.- М., 1987.- С.108-154.

Ашмарин, Н.И. Декаденты Запада и поэзии инородцев // Волжский вестник. 1895. 24 янв.

Райковский, Я. Экспериментальная психология эмоций /Я. Райковский. -М., 1979.

## *VIII лекци*
## Лирика тишкерĕвĕ. Лирика тĕсĕсем. Интонаципе çемĕ речĕ

Ăслăлăхра гражданла, медитаци, пейзаж, философилле, интимлă лирика тĕсĕсем пур. Ку пĕр енчен питĕ меллĕ, анчах та тепĕр енчен хайлавăн шухăшне ансăрлатать. Кашни самана хăйĕн лирикине çуратать.

Сӑмахран, Чӗрӗлӳ тапхӑрӗнче лирика жанрӗн тӗсӗсем – элеги тата сонет. Асӑннӑ тапхӑрти те, халӑх сӑмахлӑхӗн юррисем те, хальхи лирика жанр тӗсӗсем те формӑпа содержани тӗлӗшӗнчен тӗрлӗрен.

*Лирика* сӑвӑра ҫеҫ мар, эпикӑлла тата драмӑлла хайлавсенче те ҫаврӑмсемпе фрагментсенче тӗл пулма пулать. Автор сӑнарӗ кӑна мар, хайлаври геройсем те *лирикӑн* паллине илеҫҫӗ. Ку вӑл лирика форминче палӑрать: персонажсем ахаль кӑна калаҫмаҫҫӗ, вӗсем лирикӑлла шухӑшлаҫҫӗ, поэтикӑлла сӑмахсемпе, интонаципе ҫемӗ урлӑ хӑйсен чун ыратӑвӗ пирки пӗлтереҫҫӗ. Тӗслӗхрен: А.Емельяновӑн «Шӑнкӑрав куракӗ», А.Артемьевӑн «Саламти», Ю.Скворцовӑн «Сурӑм хӗрӗ», Н.Петровскаян «Шурӑ лили» т.ыт.те.

Интонаципе ҫемӗ речӗ пирки калаҫнӑ чухне «метр», «ҫемӗ», «интонаци» ӑнлавсене тӗрӗс пӗлни, вӗсене сӑвӑсенче палӑртма пултарни пӗлтерӗшлӗ. «Метр – самая общая схема звукового ритма стиха, т.е. предсказуемого появления определенных звуковых элементов на определенных позициях» (М.Л.Гаспаров). «Ритм, периодическое повторение каких-либо элементов текста через определенные промежутки» (Вӑлах).

Метрпа ҫемӗ уйрӑмлӑхӗ пирки Л.И.Тимофеев (Слово в стихе. М., 1987. С.145) ҫапларах ҫырнӑ: «Метр определяет лишь общую тональность стихотворной речи, тогда как ритм с предельной гибкостью передает малейшие оттенки выразительности той конкретной интонационно-эмоциональной ситуации, которую несет в себе каждое словосочетание именно в данном произведении». Метрпа ҫемме шахмат вӑййипе танлаштарса пӑхни кӑтартуллӑ. Енчен те метр вӑл тӗрлӗ фигурӑсем еплерех куҫма пултарасси пулсан, ҫемӗ вара – кашни конкретлӑ вӑййра ҫав фигурӑсем еплерех куҫса ҫӳрени. Метр абстрактлӑ, ҫемӗ конкретлӑ, индивидуаллӑ.

Метрта содержани шырани тӗрӗсех мар. Пӗрремӗшӗнчен, метр вӑл – сӑвӑра реализациленмен идея, структура пек кӑна палӑрать. Тӗслӗхрен, Ҫ.Мишши «Чӑваш! Чӑваш!..» сӑввине тӑватӑ картлӑ (стопаллӑ) виҫепе ҫырни иккӗленӳсӗр. Ҫав хушӑрах

йĕркесенчи çемĕ тĕрлĕрен, апла пулсассăн, пĕр метра тĕпе хунă йĕркесем тĕрлĕрен çемĕллĕ. Çакă çемĕ интонаципе, ун урлă шухăшпа ытларах çыхăннине пĕлтерет. Çеçпĕлĕн асăннă săввинче икĕ сыпăклă карт (стопа) сиксе юлнă тĕслĕх пур: «Чăвашăн ăсĕ хурăç пул//–Пăр кас,–ак çирĕп чул//Ăспа чул кас та вут кăлар!» Çакна поэт шухăша пĕтĕмпех эмоци, интонаци тĕлĕшĕнчен çураçтарса килĕштерес тĕллевпе тăвать. Е тата çав сăвăрах пĕр синтаксис пĕрлĕхĕ тăвакан фразăна пĕрремĕш йĕркерен иккĕмĕш йĕркен пуçламăшне куçарнинех (вырăсла перенос теççĕ) илсе пăхар: «Чăваш чĕри! Халăх вучаххи// Пулса тăр! Ылтăн шăратан // Хуран пек чашкăрса вĕре». Ахаль пуплевре «вучаххи» сăмах хыççăн ниепле сикчĕ (пауза) те пулма пултараймастчĕ. Кунта вара çав сикчĕ пулни интонацие улăштарать, шухăша хăйне евĕрлĕ калаттарать. Çапла вара сăввăн хăйĕн интонацийĕ пур, ăна тĕрлĕрен сикчĕсем, пусăмлă сыпăксем ылмашăнни (силлабо-тоника сăввинче), темпа улăштарни йĕркелеççĕ.

Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем сăввăн шухăшне интонаци йĕркелесе пынипе килĕшесшĕн мар. Вĕсен шухăша метр, унăн тĕрлĕ виçисем те уçса пама пултараççĕ. Кунта тĕрĕслĕх те пур. Калăпăр, виçĕ сыпăклă виçесенчен пулнă йĕркесем (анапест, дактиль, амфибрахи) икĕ сыпăклисенчен (ямб е хорей) сулмаклăрах илтĕнеççĕ пек. Тан сыпăклă сăвăра та йĕркесенче сыпăк нумайрах пулни вĕсене «йывăрлатать». Ун пек чухне йĕркери çуркамсен (уйрăм сыпăк ушкăнĕсене чăваш сăввин теорийĕнче çапларах каланă, вырăсла «дольник» тенине те çав терминпах ăнлантараççĕ) хисепĕ те ӳсет: 4 сыпăк + 3 сыпăк + 4 сыпăк – 11 сыпăклă сăвăра.

Çапах та кунта метртан ытларах интонаци, синтаксис кăткăсланăвĕ тĕпре тăни курăнать. Çакă Ç.Мишшин сăввисенче аван палăрать. Хурлăхлăрах кĕвĕллĕ, тонлă сăвăсенче çемĕ юхса пымасть, шухăш пăлханăвне ăнланнăн, çемĕ те такăнать, пусăмсем арпашăнаççĕ:

Юлашки чĕл алра, юлашки чĕл.
Апат – юлашки хуран.
Выç куçлă ыранăн вил пичĕ
Шур шăллăн пăхать, пăхать куçран.
Юлашки чĕл умра... Юлашки чĕл.

Çак виçĕ картлă анапест виçипе çырнă сăвă çемми пĕр тикĕс мар: иккĕмĕш йĕркере пĕрремĕш картăн пĕр сыпăкĕ сиксе юлнă, тăваттăмĕш йĕркере пĕр сыпăк ытлашши пек, анапест амфибрахи виçипе ылмашăнать, вĕçĕнче поэт каллех малтанхи çемĕ патне таврăнать. Метафорăллă эпитетсем чĕлхене йывăрлатаççĕ, эмоци хуçăк кăмăл çуратать. Юлашки йĕркери нумай пăнчă та нумай пĕлтерĕшлĕх тата уçăмсăрлăх туйăмне палăртма пулăшать.

Çак виçепех çырнă «Катаран каç килсен, каçхи кунăн мĕлки...» сăввăн интонацийĕ татах урăхларах. Унăн сăвви малтанхи сăвăри пек таткаланмасть, çепĕççĕнрех юхса пырать. Çакна сасă повторĕсем те лайăх туйтарса пыраççĕ.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Лирика темин тĕсĕсем.
2. Метрпа çемĕ çинчен Л.И.Тимофеев мĕн çырнă («Слово в стихе» кĕнеки тăрăх)?
3. Сăввăн интонацине мĕн-мĕн йĕркелет?
4. Эмоци ретне, сăввăн кĕвĕлĕхĕпе тонне çемĕ еплерех йĕркелет (Ç.Мишшин пĕр-пĕр сăвви тăрăх)?
5. Метр тĕсĕсем.

## Усă курмалли литература

Метр, ритм, ритмико-композиционная сторона произведения //В.Е.Хализев. Теория литературы. - М., 1999. С.232-238, 281, 283, 311, 333.

Тимофеев, Л.И. Слово в стихе /Л.И. Тимофеев. - М., 1987. - С.137-202.

Родионов, В.Г. Чувашский стих /В.Г. Родионов. - Чебоксары, 1992. - С.97-104, 136-149, 202-205.

Лотман, Ю.М. Анализ поэтического текста. Структура стиха /Ю.М. Лотман.- Л., 1972. С.46-59, 137-143.

Илюшин, А.А. Стих //Введение в литературоведение: учеб.пособие.- М., 2000.- С.364-381.

## *IX лекци*

## Лирика тишкерĕвĕ. Артикуляципе сасă повторĕсен речĕ

Сасă повторĕсем тĕрлĕрен пулаççĕ: пĕрисем сăвва эрешлеççĕ, теприсем çемĕ йĕркелеме пулăшаççĕ. Вырăнĕпе те уйăраççĕ вĕсене. Йĕрке вĕçĕнчи сасă повторĕсене састаш (рифма) теççĕ, йĕрке пуçламăшĕсемпе çуркам (сыпăк ушкăнĕсем) пуçламăшĕнчисене аллитераци теççĕ. Чăваш халăх сăввисенче юлашки тĕсĕ ытларах сарăлнă пулнă. Çапах та фольклор тексчĕсенче састаш тăвасси те тĕл пулать.

Йĕрке пуçĕнче пулакан сасă повторĕ икĕ йĕркене пĕр-пĕринчен лайăхрах уйăрма пулăшать. Тĕслĕхрен:

Хир-хир урлă килтĕмĕр
Хĕрлĕ питлĕ хĕр илме;
Ял-ял урлă килтĕмĕр
Ялти ятлă хĕр илме.

Çак тĕслĕхре юнашар тăракан йĕркесем пĕр евĕрлĕ сасăсенченех пуçланаççĕ. Çуркам пуçламăшĕнчи повторсем вара йĕркене пĕр çыхха çыхаççĕ, çемĕ йĕркелеççĕ:

Мускав хулинче / мул хаклă.
Мул хаклă мар / пуç хаклă.
Питĕр хулинче / пир хаклă,
Пир хаклă мар / пӳ хаклă...

Сасă повторĕ çемĕ çеç мар, сăнар ретне те йĕркелеме пулăшать. Куртăмăр ĕнтĕ, халăх юрринчен илнĕ тĕслĕхре сăнар пĕтĕмпех сасă вылявĕ урлă тухса йĕркеленсе пырать. Тепĕр юрăра «Хусан хулинче хут

хаклă // Чĕмпĕр хулинче чĕн хаклă» тени тĕл пулать. Паллах, çак йĕркесене чăна хурса шухăша ăнлантарма çук, сăнарсене йĕркесерен шăрçа пек тирсе пыни ку. Тĕп шухăшĕ «хаклă» тенинче, ыттисем вара çав шухăшшăн шăрçаланаççĕ.

Пирĕн çырулла поэзире састаш та вăйлă аталаннă. Ку традици ытларах вырăс, анăç поэзийĕсенчен килет темелле. Рифмăпа чăвашсен малтанхи поэчĕсем еплерех усă курнине В.Г.Родионовăн «Чувашский стих» ĕçĕнче курма пулать. Студентăн çак ыйтусене тĕплĕн пăхса тухмалла:

а) 70-90-мĕш çулсенчи (XIX ĕмĕр) поэзири сасă тата сăмах повторĕсем (155-159 с.);

ă) XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи поэзире анлă сарăлнă састашсем (159-163 с.);

б) Çеçпĕл Мишши сăввисенчи састашсемпе аллитерацисем (205-209 с.).

Сасă повторĕсемпе пĕр ретре тăракан тепĕр элемент вăл артикуляци повторĕ. Чăннипе, пĕр сăмаха тепĕр хут калани артикуляци повторĕ пĕтĕмĕшле пурнăçланнине пĕлтерет. Апла пулсан эпир чылай чухне тĕрлĕ шайри (тулли е тулли мар) артикуляци повторĕсемпе усă куратпăр. Çемçе уçă сасăсене каланă чухне чĕлхе умнерех каять, хытă уçă сасăсене каланă чухне – каярах. Хупă сасăсене каланă чухне те çавах. Пулнă вырăнĕпе вĕсене темиçе ушкăна кĕртме май пур: тутапа (в, м, п, б, ф), чĕлхен малтанхи пайĕпе (с, з, ç, ч, ш, ж, т, д, л, н, р), чĕлхе варрипе (й) тата тĕпĕпе (х,к) пулаканнисем. Чĕлхе варрипе тата тĕпĕпе пулаканĕсене пĕр ушкăна кĕртсе, вĕсене пĕр сасăпа (К) палăртатпăр. Чĕлхен малтанхи пайĕпе пулаканнисене вара икке уйăрма пулать: чĕлхе вĕçĕпе (с, з, ç, ч, ш, ж) – вĕсене (С) сасăпа палăртатпăр тата чĕлхен малтанхи пайĕпе пулакан сасăсем (т, л, н, р, д) – вĕсене (Т) сасăпа палăртатпăр. Тутапа пулаканнисене (М) сасăпа палăртатпăр, палаталлă уçă сасăсене (Э), велярлисене – (А) сасăпа.

Ку ыйтупа тĕплĕнрех «Чувашский стих» кĕнекере паллашма май пур. Çакна шута илмелле: артикуляци

повторĕ чи малтан интонаципе çемме тата эмоцие йĕркелеме пулăшать. Ăна вулавçă илтмессе те пултарать, мĕншĕн тесен йĕркеленӳ питĕ таран шайра пырать. Артикуляци контурне палăртни поэтăн индивидуаллă интонацине уйăрса илме май парать. **Артикуляци контурĕ** тесе вăл е ку ушкăна кĕрекен сасăсене, вĕсене пĕлтерекен паллăсемпе (тĕрĕссипе сас паллисемпе) палăртса тухнине калаççĕ. Тĕслĕхрен, «чунăм», «сăнăм», «çăтăп», «шăлăп» йышши сăмахсен пурин те пĕр евĕрлĕ тытăм: састаш. Çавăн пек сасă тытăмĕ йĕркесерен шăрçаланса хăйне евĕрлĕ «контур» тăвать, ăна артикуляци контурĕ теççĕ.

### Ыйтусемпе ĕçсем

1. Чăваш сăввинче тĕл пулакан аллитерацисен тĕсĕсене палăртăр. Вĕсен мĕнле-мĕнле функцисем пур?
2. Чăваш сăввине састаш кĕрсе çирĕпленнин сăлтавĕсем.
3. Састаш, унăн тĕсĕсем.
4. Çеçпĕл Мишши сăввисенчи састашсемпе аллитерацисем.
5. Артикуляци повторĕ.

### Усă курмалли литература


Родионов, В.Г. Чувашский стих: Проблемы становления и развития /В.Г. Родионов. - Чебоксары, 1992.

Родионов, В.Г. Энергия, воплощенная в слове // Çеçпĕл Мишши. Çырнисен пуххи / В.Г. Родионов. - Шупашкар, 1989.- С.8-45.


## *X лекци*
## Чăваш сăвви. Унăн хăй евĕрлĕхĕ

Чăваш сăввин уйрăмлăхĕсем çинчен малтанласа XIX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче А.Фукс, В.А.Сбоев çырнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Н.И.Ашмарин, Г.И.Комиссаровпа ытти чăваш тĕпчевçисем те çак ыйтупа ĕçленĕ. 20-мĕш

çулсенче чăваш сăввине Н.Золотовпа Н.Романов тĕпченĕ. XX ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче сăвă тĕпчес ĕçе Н.И.Иванов кӳлĕннĕ.

Чăваш сăвви тĕрлĕрен пулма пултарать. Халăх сăввине илес пулсан çакăн пек сăвă никĕсĕсене куратпăр: 1) калуллă сăвă; 2) юрă сăвви. Калуллă сăвăра тĕпре калу е пуплев пулсан, юрăра кĕвĕ тăрать. Çавна май сăвă пуплевĕ кĕвве пăхăнать, унпа çураçăнать.

Калуллă сăвăсем тан сыпăклисем тата тан мар сыпăклисем пулаççĕ. Тĕрлĕ витлев–сивлев, çухăруйыхравсем, тупмалли юмахсем тан сыпăклă сăвăсен йышне кĕреççĕ, вĕрӳ-суру, кĕлĕ, мăн кĕрӳ сăмахĕсем вара тан мар сыпăклисен ретĕнче тăраççĕ.

Юрă сăввисем, тĕпрен илсен, пурте тан сыпăклă. Çапах та вĕсен кĕввинче квантитативлăх (уйрăм сыпăксене тăсарах юрлани е калани) пур. Ку вăл картсен (юрăра вĕсене ячейкăсем тесе палăртаççĕ) юлашки сыпăкĕсене, йĕрке е çуркам вĕçĕсене тăсарах юрланипе çыхăннă. Юрă сăввинче вĕсем яланах сăмах вĕçĕсемпе тӳр килеççĕ (Родионов В.Г. Чувашский стих. 1992. С.97-104).

Чăваш çыруллă поэзийĕнче икĕ тĕрлĕ сăвă тĕп вырăн йышăнаççĕ: 1) тан сыпăклă сăвă (силлабика); 2) тан сыпăклă тата пусăмлă сăвă (силлабо-тоника). Тан сыпăклă сăвăра тĕпре картсем (стопасем) мар, тан сыпăклă йĕркесем. Тĕрĕссипе çав йĕркесем çуркамсене пула икке е виççе пайланма пултараççĕ: 4 сыпăк + 3 сыпăк + 4 сыпăк; 4 сыпăк + 3 сыпăк.

Тан сыпăклă сăвăри сăмах пусăмĕсем çемĕ йĕркеленĕ çĕре хутшăнмаççĕ. Çавăнпа та Н.И.Иванов чăваш халăх сăвви силлабо-тоникăна çывăх тени тĕрĕслĕхпе тӳр килмест. Çакна ĕнентерме йывăрах та мар, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхинче сăмах пусăмĕн пĕлтерĕшĕ вырăс чĕлхинчен чылай урăхларах. Чăваш чĕлхинче пĕр-пĕр сăмаха тем тĕрлĕ пусăмпа каласан та пĕлтерĕшĕ улшăнмасть, вырăссен вара улшăнать: замок – çăра тата замок – термен, кермен т.ыт.те.

Тан сыпăклă чăваш сăввинче йĕрке варринчи çуркамсем тĕпре терĕмĕр. Çав çуркамсен вĕçĕсем ытти

сыпăксенчен уйрăларах тăраççĕ. Тĕрĕк сăввине тĕпчекенсем çуркам тата йĕрке вĕçĕнчи сыпăксем вăрăмраххăн илтĕннине палăртаççĕ.

Еплерех сăвă хывăм пуласси чĕлхе уйрăмлăхĕсенчен килет пулсассăн, чăваш силлабики силлабо-тоникăна куçма пултарнине мĕнле ăнлантармалла-ши?

Сăвă хывăм улшăнасси (трансформациленесси) шалти тата тулашри факторсенчен килет. Шалти факторĕ – чĕлхе уйрăмлăхĕсем, тулашри – культурăпа эстетика традицийĕсем. Чăваш силлабо-тоникине çирĕпленме литература чĕлхи улшăнни тата культурăпа эстетика ориентирĕсем вырăспа анăç культури енчелле çаврăнни пулăшнă. Çеçпĕл Мишшинчен пуçласа сăвăра тури калаçун акцент системине тĕпе хума пуçăнаççĕ. Ку вара пусăма куçăмлă тума пулăшать. Сăмах пусăмĕ динамикăллă пулманран сыпăксене тăсарах, «юрларах» калаççĕ, пусăмлă сыпăксене калана чухне сасă тонне улăштараççĕ.

1920-мĕш çулсенче силлабо-тоника сăввине «тоника» тенĕ. П.Хусанкай çав çулсенчи икĕ юхăм тавлашăвĕ пирки çапла çырнă:

«Çиллабĕк», «тонĕк» теттĕмĕр
(Хуппи вĕт ухмаха!)
Тавлашрăмăр, çĕнтертĕмĕр,
Халь иккĕш те паха.

П.Хусанкай 30-мĕш çулсенче В.Маяковскилле хăтланса тоника сăввисем те çырса пăхнă, анчах та вĕсем ăнăçман. Сăлтавĕ паллă: чĕлхе ирĕк памасть. Пирĕн чĕлхе агглютинациллĕ пулнă май, пусăма мар, сыпăк хисепне тĕпе хурать. Тоникăра вара тĕпре пусăм кăна.

Ирĕклĕ сăвă (верлибр) пирĕн поэзишĕн ют мар. Вăл кĕлĕ сăмахĕсемпе, мăн кĕрӳ такмакĕн сăмахĕсемпе пĕрешкелтерех. Паллах, уйрăмлăхĕ те çук мар: ирĕклĕ сăвăра тĕпре калаçу пуплевĕ, интонацийĕ, сикчĕ-цезурăсем. Сикчĕсемпе «таткалани» пуплеве урăхлатать, ахаль калаçуринчен чылай вăрахлатать. Темп вăрахланни ирĕклĕ сăвăра питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тĕслĕх вырăнне Çеçпĕл Мишшин пĕр сăввине илсе пăхар-ха:

| | |
|---|---|
| Тинĕс ахăрса кайрĕ. | НАС |
| Хӳме пек хумĕсем шавласа, | НА |
| çыран хĕрне вăйлăн пырса | А |
| çапăна-çапăна саланаççĕ. | АС |
| Тинĕс, эс вăйлă, | НА |
| Ху хумусен вăйлă, | Н |
| Хăюллă юрри сассипе | Н |
| Ман чĕрене вăй кӳрет, | НА |
| Чĕре çунтăр. | НА |
| Чĕлхе вĕçне | Н |
| Кăварлă сăмахсем килччĕр. | АС |
| Вара эпĕ хам чăваш çĕрне кайсан | Н |
| Хам вăя, | А |
| Чĕре вăйне чăваш çĕрне парăп. | НАС |
| Кăварлă сăмахăмпа | Н |
| Çамрăк чунсене вăратăп. | АС |
| Пурте «тĕнче курччăр». | НАС |
| Çут тĕнче илемне пĕлччĕр. | НАС |

Кунта çемĕ интонаципе синтаксис шайĕнче йĕркеленет. Предложенири шухăш тĕшшине «А», сказуемăя «С», ытти сăмахсене «Н» паллăсемпе палăртсан, эпир кунта çапла структура куратпăр: НАС, анчах та вăл тĕрлĕ йĕркессенче тĕрлĕ фигурăсем тăвать (сăввăн сылтăм енне пăхăр).

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Чăваш сăввине тĕпченин кĕске историйĕ. Ĕçсене хак памалла, вĕсен лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене палăртмалла. (Рефератсем çырса).
2. Чăваш сăввин тĕсĕсем. Калуллă сăвă.
3. Чăваш халăх юррипе сăвви.
4. Чăваш çыруллă поэзийĕнчи тан сыпăклă сăвă.
5. Чăваш силлабо-тоникин уйрăмлăхĕсем.
6. Чăваш ирĕклĕ сăвви.

## Усă курмалли литература

Родионов, В.Г. Чувашское и тюркское стихосложение: учеб.пособие /В.Г. Родионов.‒Чебоксары, 1986.

Комиссаров, Г.И. Чуваши казанского Заволжья // О чувашах.- Чебоксары, 1995.

Иванов, Н.И. Чӑваш сӑвви /Н.И. Иванов.- Шупашкар, 1977.

Чӑваш сӑввипе чӗлхе стилӗ ҫинчен. - Шупашкар, 1957.

## *XI лекци*
## Эпос. Эпика несӗлӗ. Идейӑпа эстетика содержанийӗ. Илемлӗ содержанин типӗсем

Эпос (калану) – литературӑн виҫӗ несӗлӗнчен пӗри, лирикӑпа тата драмӑпа юнашар тӑрать; кӑтартса паракан, ӳкерсе кӑтартакан несӗл. Уйрӑм ҫын е халӑх пурнӑҫне анлӑн сӑнлать, чылай чухне авторпа ҫыхӑнман пулӑмсемпе ӗҫ-пуҫа уҫса парать. Кӗске, вӑтам тата анлӑ калану пулать. Тӗслӗхрен, анлӑ калану – роман, вӑтам калану – повесть, кӗске калану – калав т.ыт.те.

Идея пирки сӑмах хускатсан унӑн пӗлтерӗшӗ тӗрлӗ литературӑсенче тӗрлӗрен пулнине палӑртмалла. Сӑмахран, Ф.Достоевский шухӑшӗпе, литературӑра юхӑм тени пачах та кирлӗ мар, авторӑн илемлӗх пирки кӑна шухӑшламалла, идеи вӑл унсӑрӑнах пырса кӗрет, мӗншӗн тесен идея илемлӗхӗн пайӗ пулса тӑрать. Достоевский пире идейӑпа хӑй халлӗн кӑтартмалла марри пирки асӑрхаттарать, идея тӳрремӗн мар, илемлӗх мелӗсенче, сӑнарлӑхра палӑрса тӑтӑр тесе каланӑ (Достоевский Ф.М. Об искусстве., 1979. С.522-523) Н.Добролюбов произведени идейисӗр пуҫне автор идейи уйрӑм пулнине палӑртать. Хӑшӗсем тата идея тесен пурнӑҫри идеологие хайлавра тӳрремӗн ҫырама пӑхаҫҫӗ. Теприсем идея литературӑра эстетика е эмоци сӗмне илнипе уҫҫӑн палӑрмасть теҫҫӗ. Л.И.Тимофеев ҫырнӑ тӑрӑх, хайлавра нумай идейӑпа тема пулма пултарать. Идея хайлава ҫырнӑ вӑхӑтра кӑна йӗркеленет. Вӑл ҫапларах идейӑсене палӑртать: идея–ыйту, идея–йӑнӑш (суя хурав) тата идея–хурав (тӗрӗс хурав). И.И.Виноградов тӗпчевҫӗ ҫак идейӑсен классификацине йышӑнмасть. Ку ҫулпа кайсан идея – хак пани, идея – ӑнлантару; идея –

пĕтĕмлетӳ тени те кирлĕ пулĕччĕ, тет вăл. Унăн шучĕпе, идея содержанине сăнар системи урлă кăна палăртма май парать. Идея содержанийĕн тĕпĕнче темăпа проблемăна тата «пурнăçа» мар, идея пафосне курать.

Пафос вăл илемлĕ содержанин енĕ. Илемлĕ содержани, пафос тĕсне кура, темиçе типлă пулать. Сăмахран, Н.Г.Чернышевский пафосăн виçĕ тĕсне палăртнă: çĕкленӳллĕ (возвышенное), трагедиллĕ (трагическое) тата комиклĕ (комическое). Илемлĕ литературăра пафосăн ытти типĕсем те пур: героикăллă, этологиллă, интеллектуаллă, сентименталлă тата романтикăллă. Ку типлă пафоссем ансаттисен ретне кĕреççĕ, тет И.Ф.Волков. Илемлĕ содержанин кăткăс типĕсен йышĕнче: трагедиллĕ, драмăллă тата романлă. Комиклипе унăн тĕсĕсем (сатира, юмор, ирони, сарказм) шалтан хире-хирĕçле илемлĕ содержани ушкăнне тăваççĕ.

Илемлĕ содержанин героикăлла типĕ çинчен Гегель çырнă. Вăл героикăлли авалхи тĕнчере, патшалăх йĕрки пуçланса кайиччenхи вăхăтра пулнă тесе ĕнентерет. Г.Н.Поспелов çакна хирĕçлет, героикăллине çĕнĕ вăхăтра та тупма май пуррине çирĕплетет. И.Ф.Волков çак ăнлантарăва тӳрлетӳсем кĕртет: 1) героикăлла ĕç наци чиккинчен тухса пĕтĕмĕшле этемлĕх пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать; 2) героикăлла ситуаци яланах çынран нумай вăй, энерги илет, тӳсĕмлĕхе тĕрĕслет.

Илемлĕ содержанин героикăлла типлă хайлав чăваш литературинче тен, Çуйăн Хĕветĕрĕн (Семен Федорович Федоров-фольклорçă) «Улăпне» кунта кĕртме май пур? Ытти тĕрĕк халăхĕсен «Алпамыш», «Манас», «Гэсэр» йышши эпоссем пур, вĕсем чăн-чăн героикăлла типлă хайлавсем шутланаççĕ.

Илемлĕ содержанин этологилле типĕ традицилле пурнăçăн куллен-кунхи сăнне илемлĕн ӳкерсе кăтартнăран пулать. «Этологи» тени «нравоописани» тенипе пĕр килет, çав термина литература ăслăлăхне малтанласа Г.Н.Поспелов кĕртнĕ. Чăваш литератури нумай енчен этологиллĕ. Нравоописани – пурнăç йăли çырăвĕ. Йăлари пурнăçа çырса кăтартасси чăваш литературинче питех те анлă сарăлнă. Сăмахран, пĕр-пĕр çыннăн пур-

нăç йăлине сăнлани. Ахальтен мар ĕнтĕ чăваш прози йăла очеркĕсенчен пуçланса кайнă тесе шутлаççĕ. И.Ивановăн, И.Юркинăн хайлавĕсенче шăпах йăлари пурнăçа çырса кăтартассине тĕпе хунă.

И.Ф.Волков шухăшĕпе хайлавсенче ăса, интеллекта тĕпе хунă пулсан, ăна этемлĕхĕн чи хаклă пуянлăхĕ пек, çитменлĕхĕсене пĕтерме пулăшакан тĕп вăй пек кăтартнă пулсан, вĕсен илемлĕх содержанине интеллектуаллă типлă тесе калама май пур. Ăслăлăхра çавăн йышши типлă хайлавсене рационализмлă, философи шухăшлă тесе калани те тĕл пулать.

Илемлĕ содержанин сентименталлă типĕнче герой сăпайлă, çемçе кăмăллă, шухăшлă пулнине, вăл яланах ытти çынсем патне ырă кăмăлпа, таса чунпа пынине пĕлетпĕр. Студентсен Ф.Шиллер, Г.Н.Поспелов, И.Ф.Вол-ков сентименталлăх çинчен ăнлантарнă уйрăмлăхсене пĕлмелле.

Илемлĕ содержанин романтика типлă хайлавра романтиксем, ытларах чухне çамрăксем пулаççĕ. Мĕн пур тĕнче ун пек çынсемшĕн пурăннăн, вĕсем тавра ыттисем çаврăннăн, хăйсем вара «çĕр кăвапи» пулнăн туйăнать романтиксене. Енчен те сентименталлă тата интеллектуаллă литературăра герой хăйĕн туйăмне е шухăшне ыттисенчен уйăрмасть пулсассăн, романтикăлла литературăри герой вара уйăрса пăхать. Çавăн йышши хайлавсенче уйрăм личность хăй хаклăхне мала лартать. Ахальтен мар И.Ф.Волков çакăн йышши илемлĕ содержание хăй хаклăхлă-личноçлă (самоценно-личностный тип) тесе калать. Çав типлă содержани романтизм литературинче кăна мар, реализм литературинче те тăтăшах тĕл пулма пултарать. Кунта романтика типĕпе романтизма пăтраштарса яма юрамасть.

Хальхи ăслăлăхра «трагеди» ăнлава тĕрлĕрен ăнлантарни пур. Сăмахран, илемлĕ литературăри герой усал вăя хирĕç кĕрешсе вилнине сăнлакан хайлав. Хăшĕсем, эстетика куçĕпе пăхса, Н.Чернышевский традицийĕсене малалла тăсаççĕ. Тĕслĕхрен, Ю.Борев трагедиллин виçĕ паллине палăртать: 1) личность вилни е йывăррăн асапланни; 2) çав çухатăва ыттисем питĕ йывăррăн тӳссе ирттерни; 3) уйрăм индивидуаллăхра вилĕмсĕр

пĕлтерĕшлĕ ĕçсем палăрни (Борев Ю. Эстетика. М., 1988. С.77). Г.Н.Поспелов трагедиллин пĕлтерĕшне питех те ансăрлатса пăхать, ситуаци шайне антарса лартать: «Трагическая ситуация создается... не только столкновением с угрожающими внешними силами, но прежде всего внутренним противоречием между жизненными стремлениями личности и признаваемыми его сверхличными ценностями жизни» (с.201).

Драмăлла хавха трагедиллинчен чи малтан конфликт геройсен е ситуаци çураçăвĕпе вĕçленнипе уйрăлса тăрать. «В драме сами индивиды развитием действия подводятся к тому, чтобы отказаться от борьбы и прийти к взаимному примирению их целей и характеров», – тенĕ Гегель.

Илемлĕ содержанин романлă типĕ çинчен калаçас пулсан М.М.Бахтинăн «Эпос и роман» ĕçĕнче хускатнă шухăшсене палăртмалла. Роман – йĕркеленсе çитмен, ыттисем пек хытса ларман жанр, çавна пулах чĕрĕ пурнăçа тарăнрах та тĕрĕсрех ӳкерсе кăтартма пултарать. Чăннипе кунта сăмах илемлĕ содержанин уйрăм, пĕр евĕрлĕ е хупă (трагизм, драматизм) типĕсенчен анлăрах типĕ пирки пырать. Çав типсем романра кăткăс çыхăнура пулма пултараççĕ, çапах та тĕпре унта яланах çут тĕнчепе тĕрлĕ енчен çыхăннă личность тăрать. Эппин, романлă пафос хăй хаклăхлă-личноçлă тип ытти пафоссемпе çураçăннине пула йĕркеленет.

Комикли содержани объекчĕпе ăна палăртмалли форма е ун çинчен субъективлă калани тӳр килменнинче палăрать. Пĕрремĕшĕнче содержанипе форма, ăшĕпе тулĕ тӳр килмеççĕ, художник çавна уçса парать. Комиклин çак тĕсĕсене *юморпа сатира* теççĕ. Иккĕмĕшĕнче кулăш эффекчĕ субъективлă калани содержани объекчĕпе хирĕçле пулнипе çуралать. Комиклин çак тĕсĕсене *иронипе сарказм* теççĕ.

Комикли çинчен Г.Н.Поспелов калани çителĕксĕр, вăл социаллă объекта критиклекен кулла кăна йышăнать. Карнавал кулли те (М.М.Бахтин), култаракан кулă та (М.И.Стеблин-Каменский) уншăн çук. Çав хушăрах çакна та шута илмелле: юлашкисене хавха ретне

лартса пăхма йывăртарах. Карнавал куллине Н.Г.Чернышевский фарс тенĕ. Комиклисен ретне вăл йĕплеве (острота) тата юмора кĕртнĕ.

### Ыйтусемпе ĕçсем

1. Эпос. Эпика несĕлĕ.
2. Хайлав идейи çинчен тĕпчевçĕсем мĕн çырнă?
3. Илемлĕ содержанин ансат тата кăткăс типлă хавхисем (пафосĕсем).
4. Комикли тата унăн тĕсĕсем.
5. Н.Г.Чернышевскин «Возвышенное и комическое» (1854) ĕçĕ.

### Усă курмалли литература


Волков, И.Ф. Теория литературы /И.Ф. Волков.- М., 1995.- С.101-128 (конспектлăр).

Введение в литературоведение: хрестоматия. – М., 1997. С.112-113, 140-147 (конспектлăр).

Поспелов, Г.Н. Теория литературы /Г.Н. Поспелов.- М., 1978.- С.188-230.

Тимофеев, Л.И. Основы теории литературы /Л.И. Тимофеев. М., 1976. С.146-152.

Хализев, В.Е. Эпос // Введение в литературоведение: учеб.пособие / В.Е. Хализев.-М., 2000.- С.507-511.


## *XII лекци*
## Проза тишкерĕвĕ. Тема содержанийĕ. Характер. Фабула

Н.Г.Чернышевский шухăшĕпе кашни произведенирех тарăн шухăш пулмалла. Пурнăçа ÿкерсе панисĕр пуçне, искусствăн тепĕр тĕллевĕ вăл пурнăçа ăнлантарса парасси тата пурнăçри пулăмсене хак парасси (Русская литература XIX в. – М., 1967. С.526). Апла писателĕн вулакана каласа памалли, пĕр-пĕр кирлĕ те çивĕч ыйтăва кăларса тăратни, ун тавра шухăшласа пăхма сĕнни пулмалла.

Илемлĕ хайлавăн идея содержанине тĕллесе кăтартма май çук, вăл хăйĕн формипе витĕннĕ. Унăн форми вара тема содержанийĕ, характер, фабула, вĕсен шайĕнчи ытти элементсем пулса тăраççĕ.

Тема – хайлавра мĕн çинчен каласа кăтартни. ЛЭСра çапла ăнлантарнă: «Круг событий, образующих жизненную основу эпических и драматических произведений и одновременно служащих для постановки философских, социальных, этических и других идиологических проблем» (с.437).

Темăна хайлавăн эстетика чăнлăхĕпе чăн пурнăçа çыхаканĕ, вĕсен хушшинче тăраканĕ теме май пур. Çавăнпа та ăна литература ăслăлăхĕнче икĕ тĕрлĕ ăнлантараççĕ: 1) чăн пурнăç куçĕпе пăхсан тема вăл хайлавăн «ӳкерчĕклĕ» содержанийĕ, хайлавра кăтартни; кун пек чухне тĕпчевçĕ чăн пурнăçа еплерех ӳкерни, автор концепцийĕ çинчен калать; 2) эстетика чăнлăхĕн куçĕпе пăхсан хайлавăн шалти тата çыравçă пултарулăхĕн пайăр темисем çинчен калаçма тивет.

С.И.Кормилов тĕпчевçĕ тема пиллĕк таранах пулма пултарасси çинчен çырать. Г.Н.Поспеловшăн вара темăн пĕр пĕлтерĕш кăна.

Тема содержанийĕ идейăпа эстетика содержанийĕн форми пулать. Хавхана палăртма пулăшакан элементсем те çакăнтах кĕреççĕ. Чи малтан характер пирки калаçăпăр. Вырăс чĕлхинчи характер сăмахпа эпир ытларах чухне уйрăм çыннăн çирĕпленсе ларнă психика енĕсене палăртнă чухне усă куратпăр. Литература ăслăлăхĕнче çак сăмахăн пĕлтерĕшĕ урăхларах: «характер художественный ... образ человека в художественном произведении, очерченный с известной полнотой и индивидуальной определенностью, через который раскрываются как исторически обусловленный тип поведения (поступки, мысли, переживания, речь), так и присущая автору нравственно-эстетическая концепция человеческого существования» (ЛЭС. С.481). Илемлĕ литературăра характер тĕрлĕ детальсемпе ситуацисенче, сăнарсен (геройпа–герой, геройпа–персонаж, геройпа–калуçă) çыхăнăвĕнче палăрать.

Европăри халăхсен Çĕнĕ вăхăтри литературинче конфликта тата сюжета йĕркелесе пыраканĕ вăл тĕрлĕ характерсен хутшăнăвĕ. Урăхла каласан, геройсем пĕр-пĕринчен чи малтан характерсемпе уйрăлса тăраççĕ, çакă вара ĕç-пуç (событие) çулне-йĕрне палăртать. Мĕн тери кăткăсрах та хире-хирĕçлĕрех характерсем, çавăн чухлĕ хивререх те çивĕчрех конфликт йĕркеленме пултарать.

Чăваш литературинче, уйрăмах малтанхи тапхăрта, хайлавăн тĕп шухăшне характер урлă мар, ĕç-пуç, сюжет урлă палăртма тăрăшнă. Сăмахран, «Нарспи» поэма сюжечĕ характерсене пула аталанса пырать теме май çук. Моисей Федоров тĕпчевçĕ поэмăра *пӳрнĕлĕх идейи* (идея предопределенности) тĕпре пулнине тахçанах асăрханă. Унти мĕнпур ĕç-пуç «Пăсăк туй» моделĕпе аталанать, ăна геройсем пăхăнса пыраççĕ. Çакăн йышши хайлавсенчи ăнсăртлăх (случайность) ăнсăртлăх та мар иккен, вăл пӳрнĕлĕх пулса тăрать. Çапла вара идея содержанине характер кăна мар, ĕç-пуç черетленĕвĕ (ăнсăртран-и вăл е пӳрнĕрен черетленсе пырать) те уçса пама пулăшать иккен. Ĕç-пуçа тĕпе хурса йĕркеленнĕ хайлаври сăнарсен шăписем малтанах паллă, кунти конфликт та урăхларах аталанса пырать. Тĕрĕссипе, конфликт мар, шăпа çăмхи сӳтĕрĕлни тесе каламалла çакăн йышши хайлавсенчи ĕç-пуç черетленĕвне.

Фабула тени тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ ăнлава пĕлтернĕ. Пĕрисем, Аристотель хыççăн кайса, çак терминпа сюжет пĕлтерĕшне ăнлантарма усă курнă. Теприсем ăна сюжетăн схеми пек ăнлантарнă. Виççĕмĕшĕсем сюжета фабула схеми тенĕ. Г.Н.Поспелов вара фабулăна ĕç-пуç çинчен каласа пани, сюжета ĕç-пуç аталанăвĕ тесе ăнлантарать (ЛЭС. С.461).

Фабула идейăн форми, сюжетăн содержанийĕ пулнине асра тытас пулсан, эпир унăн пĕлтерĕшне уçăмлăрах палăртма пултаратпăр. Ĕç-пуçа тема содержанийĕ куçĕпе каласа панине фабула тесен тĕрĕсрех. Ун пек чухне персонажсен кăткăс сăнарĕсем, пейзаж, пайăр пуплев çинчен калаçни кирлĕ мар. Çаксем пурте сюжет пайне кĕреççĕ, ăна уçăмлатма пулăшаççĕ.

Фабулăра ĕç-пуçсен черетленĕвĕ хронологие çирĕп пăхăнса пырать: иртни–хальхи–пуласси. Çакăн пек вăхăт туйăмĕ ытларах европеецсен ăс-тăнĕнче аталаннă. Чăвашсен шухăшлавĕ, тухăç халăхĕсенни пек, ассоциациллĕ пулнă. Çавăн йышши шухăшлакан çын кашни япалана сăлтавласа ăнлантарма васкамасть, вăл ыттисемпе еплерех çыхăнура тăни, çураçăнни çинчен шухăшлать. Ассоциациллĕ шухăшлавра тĕпре логика мар, ăнсăртран (логикăлла шухăшлакан куçĕпе) çыхăну, сăлтавлама йывăр ассоциаци. Ассоциациллĕ шухăшлав чĕлхемĕрпе тачă çыхăннă. Пирĕн чĕлхере евĕрлев сăмахĕсем йышлă пулни те çирĕплетсе парать çакна. Çавăнпа та чăвашла çыракан ирĕксĕрех ассоциациллĕ шухăшлав енне сулăнать. Çыравçăсем ĕç-пуç логики çинчен манса кайсах пĕр-пĕр деталь, ӳкерчĕк çинчен каласа параççĕ, паянтан авалхи геройран унăн аслашшĕ патне çитсе ӳкеççĕ. Фабулăна тĕпе хунă хайлавра çакă çитменлĕхе куçать, фабулăсăр хайлавра вара лайăх ен пулса тăрать. Тĕслĕхрен, Ф.Павловăн «Судра» хайлавĕнче Ухтеркке ассоциациллĕ шухăшлавпа усă курса логикăлла шухăшлакансен ĕçне-хĕлне пĕтĕмпех камите кăларать. Хайлаври ĕç-пуç та сăмах вылявĕ çине (логика шухăшлавĕ çине мар) таянса аталанать. Камитĕн фабули çук тесен те йăнăшах пулмĕччĕ.

Г.Федоров тĕпчевçĕ асăрханă тăрăх Ю.Скворцовăн хăш-пĕр хайлавĕсен те фабулисем çук. Вăл чăваш литературинче характерсемпе фабулăсен вырăнĕ вырăс литературинчен урăхларах пулнине тĕрĕс палăртма пултарчĕ. Студентсен унăн юлашки вăхăтра çырнă ĕçĕсемпе тĕплĕнрех паллашмалла, литература теорийĕ наци хăй евĕрлĕхĕ пулнине, пĕр литература материалĕ çине таянса тунă теорине тепĕр литературăпа калăпласа пăхма май килменнине лайăх ăнланса илмелле.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Мĕн вăл тема содержанийĕ? Мĕн вăл тема?
2. Илемлĕ характер. Унăн ĕç-пуçа аталантарас ĕçри вырăнĕ.

3. Мĕн вăл «пӳрнĕлĕх идейи» (идея предопределенности)?

4. Фабулăна тĕрлĕрен ăнлантарни. Фабула – идея форми.

5. Фабула тата ассоциациллĕ шухăшлав. Вĕсен хайлавсене йĕркелес хевтисем.

### Усă курмалли литература

Тимофеев, Л.И. Основы теории литературы /Л.И. Тимофеев.- М., 1976. С.152-155.

Федоров, Г.И. Художественный мир чувашской прозы 1950-1990-х годов /Г.И. Федоров.- Чебоксары, 1996.

Хализев, В.Е. Теория литературы /В.Е. Хализев.- М., 1999. - С.35-48, 50–53, 133-134, 157, 215, 266.

Метин, П.Н. Эпика текстне тишкересси. Тишкерӳ теорийĕ тата практики: вĕренӳ пособийĕ /П.Н Метин.- Шупашкар, 2007. – 162 с.

## *XIII лекци*

## Проза тишкерĕвĕ. Персонажсем. Автор тата герой. Прототип. Сюжет. Пайăр пуплев

Персонаж тесе эпир хайлаври сăнарсене калатпăр. Вĕсенчен пĕрисем, тĕпре тăраканнисем, геройсем пулаççĕ, ытти сăнарсене персонажсем теççĕ. ЛЭСра литература геройне çапла палăртнă: «Литературный герой, художественный образ, одно из обозначений целостного существования человека в искусстве слова. Термин... имеет двоякий смысл: 1) он подчеркивает господствующее положение действующего лица в произведении (как главного героя в сравнении с персонажем), указывая, что данное лицо несет основную проблемно-тематическую нагрузку...; 2) под термином ... понимается целостный образ человека – в совокупности его облика, образа мыслей, поведения и душевного мира...» (с.195).

А.И.Белецкий хайĕн «В мастерской художника слова» (1923) ĕçĕнче персонажсене сăмахлăхра (халăхăн-

нинче те, çыруллинче те) тĕрлĕ тапхăрта тĕрлĕ мелпе ўкерсе-сăнласа кăтартни çинчен калать. Истори куçĕпе пăхсан, персонажсене тĕрлĕ тапхăрта (вăхăтра) çапларах мелсемпе ўкернĕ:

1. Чи малтанах персонажсен тĕп пĕлтерĕшĕ вĕсен ĕçне-хĕлне сăнлассинче пулнă (юмахсенче). Хайлавра персонажсен ăшри туйăмĕ, кăмăл авăкĕ ўкерĕнмен, вĕсене кăтартасси кирлех те пулман. Ытларах тулашри енсене палăртса кăтартнă, çут çанталăк пулăмĕсемпе çыхăнтарнă (юрăсенче). Кашни персонажăн хăйĕн яланхи палли пулнă: тиллĕн – чеелĕх енĕпе, чĕрĕпĕн – ăс енĕпе, упан – ырă кăмăллăхпа ытти персонажсене пулăшас енĕпе, е тата сайра хутра вăйне кура ухмахланнипе те.

2. Паттăрлăх эпосĕнче кашни сăнарăн хăйĕн тĕп енĕ, палли пур. Хайлаври персонаж паттăр, ырă пулсан, унăн тата ăслă та, вăйлă та, хитре те пулмалла.

3. Çĕнĕ вăхăтри литературăри сăнарсем типлă пулма пултарнине палăртаççĕ çыравçăсемпе тĕпчевçĕсем. Сăмахран, Ф.Достоевский тип, типлă сăнар – нихçан та чăнлăхрипе тўр килмест, чăнлăх вара художник (писатель) куçĕнче, унăн пултарулăхĕнче, çавăнпа та типлă сăнар чăнлăхăн çурри, çурма чăнлăх нумай чухне суя, – тесе ăнлантарать.

4. Вырăс литературинче персонажăн ăшри туйăм авăкĕсене, улшăнăвĕсене, аталанăвне кăтартассипе уйрăмах Ф.Достоевскийпе Л.Толстой пулнă. Паллă литературовед М.Бахтин Ф.Достоевский персонажĕсем уйрăм çынсене е социаллă сийсене мар, идейăсене сăнарлать, тет. Достоевский хайлавĕсенче хайлав идейи кăна мар, персонаж идейи пуррине палăртать.

Европа çыравçисен шухăшĕпе илемлĕ хайлавра тĕрлĕ идеалсен хирĕçĕвне кăтартмалла. Сюжета, конфликта аталантарса йĕркелени ăнăçлах мар иккен. Чăваш илемлĕ сăмахлăх тĕнчи ку тĕлĕшрен хăй евĕрлĕ. Чылай чухне сюжета геройсем йĕркелемеççĕ, персонажсем хăйсем ĕç-пуç аталанăвне пăхăнса пыраççĕ.

Малалла «автор тата герой» ыйтăва пăхса тухар. Хайлава автор хăй хак панă чухне вăл яланах тĕрĕс

пулмасан та пултарать. Писатель хайланӑ чухне хӑй геройӗн пурнӑҫне тӳссе ирттерет пулсан, хатӗр хайлава хак панӑ чухне вара ӑспа виҫсе шухӑшласа калаҫать. Кӗнекене вӗҫлесен геройсем хӑйсен авторӗнчен уйрӑлса каяҫҫӗ. Тӗрӗссипе кунта икӗ субъект пирки калаҫмалла: 1) автор-хайлавҫӑ (автор-творец) тата 2) автор-ҫын (автор-человек). Автор-ҫын ҫуралать, кӗнекине ҫыриччен те, ун хыҫҫӑн та пурӑнать. шӑпах ҫав ҫын критик пулма пултарать. Автор-хайлавҫӑ вара кӗнекерен уйрӑлмасть, вӑл текстра пурӑнать.

Автор кашни уйрӑм герой курнипе пӗлнине кӑна пӗлсе ҫырлахмасть, вӑл вӗсенчен чылай ытларах курать те пӗлет. Герой тӗнчи, автор тӗнчипе танлаштарса пӑхсан, пулса ҫитнӗ, вӗҫленнӗ тӗнче. Автор-ҫын пурӑннӑ чухне унӑн тӗнчи хӑйшӗн вӗҫленмен-ха (незавершенность события).

«Автор-герой» ҫыхӑну виҫӗ тӗрлӗ пулать: 1) герой автора пӑхӑнтарать; герой тулашӗнчи тӗнче чухӑн, ӑна эпир чун-чӗре тӗлӗшӗнчен кӑна пӗлетпӗр, сӑнӗ-пичӗ, тулашӗ ҫук унӑн; 2) автор героя пӑхӑнтарать, герой ячӗпе автор калаҫать; герой автобиографиллӗ пулса тухать, вӑл автор куҫӗпе курса, пуҫӗпе шухӑшласа калаҫать; ҫакӑн йышши геройсем авторшӑн вӗҫленнӗ сӑнарсем мар, вӗсене вӑл ҫӗнӗрен ҫӗнӗ кӗнекесене кӗртме пултарать; 3) герой хӑйӗн тӗнчине хӑех туса ҫитерет; автор позицийӗ фонра кӑна курӑнать, автор геройран кулма та, ӑна ҫӗклесе яма та пултарать.

Геройсем хӑйсен пурнӑҫӗпе пурӑнасшӑн пулни ҫинчен А.Толстой ҫапла ҫырса кӑтартнӑ: «Писать роман, повесть (крупное произведение) – значит жить вместе с вашими персонажами. Их выдумываешь, но они должны ожить, и, оживая, они часто желают поступать не так, как вам хотелось. Вы начинаете следить за их поступками, подталкивать их в сторону главной линии, страдать вместе с ними, расти, а иногда и срываться в бездну вместе с созданным призраком... Такой роман – органический, это искусство» (Как мы пишем. М., 1989. С.127).

Геройсен прототипĕсем те пулма пултараççĕ. Прототип чăн пурнăçри çын; çыравçă унăн сăн-сăпатне, характерне пĕр-пĕр хайлаври персонажăн сăнарне калăпланă чух тĕпе хурать. Çапах та геройсен сăнарĕсем чăн пурнăçри çынран урăхларах тăраççĕ. Писатель çут тĕнчере икĕ чăнлăх пуррине палăртать: 1) йăлари фотографилле чăнлăх; 2) илемлĕ восприятири чăнлăх, тĕрĕсрех каласан, илемлĕ суя (с.121).

ЛЭСра В.Е.Хализев çапла ăнлантарать: «Прототип ... реально существовавшее лицо, послужившее автору прообразом (моделью) для создания литературного персонажа. «Переработка» прототипа, его творческое преображение – неизбежное следствие художественного освоения первоначального жизненного материала» (с.310).

Прототиппа тĕрлĕ писатель тĕрлĕрен усă курать. Реализм литературинче прототипсем питех те йышлă пулаççĕ, классицизмпа символизмра вĕсем çукпа пĕрех. Чăваш литературинче чылай герой автобиографиллĕ, çапах та вĕсем илемлĕ сăнар пулса тăнă.

Хайлаври ĕç-пуçа геройсен, персонажсен кун-çулĕ, пурнăçĕ, шăпи урлă кăтартнине сюжет тетпĕр. Фабула геройсен характерĕсене пула та, ĕç-пуçа, событие тĕпе хунă май та йĕркеленме пултарать. Фабула характерпа е событипе тачă çыхăннă пулсан, сюжет персонажсемпе туслашнă. Сюжета вĕсемсĕр каласа пама май çук.

Малтанхи тапхăрта сăмахлăх хайлавĕсенчи ĕç-пуç вăхăт иртнине тĕпе хурса аталаннă пулнă (асамлă юмахсенче). Каярах сăмахлăхра концентрациллĕ сюжет йĕркеленет, вăл пĕр конфликт тавра çаврăнать. Конфликтăн тĕвĕленĕвĕ (завязка), аталанăвĕ (развитие), хĕрсе çитнĕ вăхăчĕ (кульминаци) тата сивĕнĕвĕ (развязка) пур. Характерсен конфликчĕ чăваш литературинче çĕнĕ япала. Событие пула йĕркеленекен сюжет çăмха сӳтĕрĕлнине аса илтерет. Ун пек хайлавсенче пӳрнĕлĕх идейи мала тухса тăрать.

Хайлаври геройсен пайăр пуплевĕсем пур, вĕсем характерсене, сăнарсене уçăмлăрах тума пулăшаççĕ. «Геройсен чĕлхи-пуплевĕ» проблемăна Г.И.Федоровăн (Чă-

ваш литературин сӑнарлӑ пуплев теорийӗ. Шупашкар, 1994) ӗҫӗнче лайӑх ҫутатнӑ. Студентсен ҫак ӗҫе тӗплӗн вуласа проблемӑна тӗрӗс ӑнланмалла.

## Ыйтусемпе ӗҫсем

1. Персонаж тата герой.
2. Персонажсене тӗрлӗ тапхӑрта тӗрлӗрен сӑнлани.
3. М.М.Бахтинӑн «Автор и герой в эстетической деятельности» ӗҫӗ.
4. «Автор-герой» ҫыхӑнун виҫӗ тӗсӗ.
5. Геройсен прототипӗсем.
6. Сюжет тата конфликт.

## Усӑ курмалли литература

Белецкий, А.И. «В мастерской художника слова» (1923) // Введение в литературоведение: хрестоматия. - М., 1988. С.274-304; М., 1997. - С.176-180, 194-196 (конспектлӑр).

Бахтин, М.М. Автор и герой в эстетической деятельности // Эстетика словесного творчества. - М., 1979: С.7-180.

Федоров, Г.И. Чӑваш литературин сӑнарлӑ пуплев теорийӗ /Г.И. Федоров. Шупашкар, 1994.

Чернец, Л.В. Персонаж, персонажей система // Введение в литературоведение: учеб. пособие. / Л.В. Чернец. -М., 2000. - С. 245-260.

Хализев, В.Е. Сюжет /В.Е. Хализев. Ҫавӑнтах. - С. 381-392.

## *XIV лекци*
## Проза тишкерӗвӗ. Калу формисем. Вӑхӑтпа талккӑша йӗркелени

Калуҫӑ (повествователь) текстра ҫыравҫӑ евчи е ҫынни вырӑнне йышӑнать, чӑн-чӑн автор кӑмӑлланӑ сӑнарлӑ пулать. Ҫавӑнпа та хӑшӗсем «автор сӑнарӗ» термин вырӑнне «калуҫӑ» ӑнлавпа усӑ курни вырӑнлӑрах теҫҫӗ. Г.И.Федоров автор сӑнарне калуҫӑран уйӑрса

пăхать. Уншăн автор сăнарĕ: 1) писателĕн хайлавĕсенчи сăнланнă пурнăҫа хак памалли мел; 2) хайлаври тĕрлĕ пайсене, тĕрлĕ сийсене пĕтĕҫтермелли мел (смысловое единство всех частей); ун позицине кăтартмалли стиль палли. Сăмахран, пĕр-пĕр ҫыравҫă романĕсенче темиҫе калуҫă. Вĕсене пуҫтараканни – автор. Автор сăнарĕ уйрăм хайлавра ҫеҫ туллин палăрать.

Калуҫă хайлава йĕркелесе, унти ĕҫ-пуҫа кăтартса тата каласа пыраканĕ. Калуҫа конкретлă хайлав авторĕ калăплать. Ҫав автор-ҫыравҫă – художникăн пĕр саманчĕ е тапхăрĕ. Чи ҫӳлте художник тăрать, унтан унăн хайлавĕсен авторĕсем, кăшт аяларах – конкретлă хайлавсенчи калуҫăсем.

Калу форми хайлаври калуҫă еплерех пулнинчен килет.

*1-мĕш сăпатри калу.* Кунта калуҫă хăй те калав тĕнчинче пурăнать, унта пулса иртекен ĕҫсене хутшăнать. Ун пек чухне калуҫăпа калавҫă (рассказчик) сăнарĕсем пĕрлешсе каяҫҫĕ. Калавҫă тĕп герой та пулма пултарать. Тĕслĕхрен, халăх сăмахлăхĕнче хăйсемпе пулса иртнĕ мыскарасем ҫинчен каласа панисенче тĕп герой яланах калавҫă пулать, унти ĕҫ-пуҫсене хутшăнать. И.Я.Яковлев букварĕсенчи калавсенче те калавҫă тĕпре тăрать. Ҫавăн пекех Д.Архиповăн «Константинопольри чăвашсем», А.Талвирăн «Пăва ҫулĕ ҫинче», Хумма Ҫеменĕн «Штрум» хайлавĕсем калу формин 1-мĕш сăпатĕнчен йĕркеленнĕ. Калавҫă хайлав тĕнчинче.

*1-мĕш сăпатсăр калу.* Ҫак калу формиллĕ хайлавра ӳкерсе кăтартни никам та ҫырса кăтартман чăн пурнăҫăн туйăнать. Калуҫă кунта хăй урăх тĕнчерен пулнине пытарма тăрăшать. Герой калуҫă тĕнчине кĕмест. Геройпа калуҫă тĕрлĕ тĕнчере.

*3-мĕш сăпатри калу.* Ку калу форминче урăх тĕнчери (хайлав тĕнчинчи мар) калуҫă пуплеве йĕркелесе пырас ĕҫе персонажа парать. Ҫавăн йышши хайлавсенче калуҫă ячĕпе персонаж калаҫать, ҫавна май ĕҫ-пуҫ та, тавралăха ӳкерни те унăн куҫĕпе курăнать. Тĕслĕх вырăнне Ю.Скворцовăн «Уках хурăнĕ» повеҫĕнчи пĕр сыпăка илсе пăхар: «... Укахви умлăн-

хыҫлӑн икӗ курка сивӗ шыв ӑсса ӗҫрӗ. Пурпӗрех ӑш канмарӗ пек. Вара вӑл асӑрхануллӑн алӑк сӑлӑпне кӑларчӗ те ҫенӗк умне тухрӗ.

Мӗн вӑхӑт-ши? Час тул ҫутӑлать-ши? Тухӑҫа кӑшт ҫеҫ кӑвак сӑн ҫапнӑ. Автансем авӑтни те илтӗнмест. Пӳртре ҫеҫ кӑмака шӑрчӑкӗсем тупӑшса чӑрлаттараҫҫӗ».

Кунта калӑва калуҫӑ мар, персонаж хӑй йӗркелесе пырать. «Пурпӗрех ӑш канмарӗ пек» сӑмахсене калуҫӑ мар, персонаж калать. «Мӗн вӑхӑт-ши? Час тул ҫутӑлать-ши?» Кунта та калаканӗ калуҫӑ пулманни кӗретӗн курӑнать. Персонаж калуҫӑ ячӗпе калаҫать.

Ҫак илсе кӑтартнӑ тӗслӗхри калу персонаж ҫине тиеннине шалти монолог тесе калаҫҫӗ. Шалти монолог геройӑн эмоцилле шухӑшлав йӗркине, черетленӗвне имитацилет, ҫавӑнпа та ӑна *ӑн юхӑмӗ* (поток сознания) ӑнлавпа пӗр килтереҫҫӗ (ЛЭС. С.65).

Калун 1-мӗш форминче хайлав (текст) тӗнчипе коммуникаци ситуацийӗн тӗнчи (мир коммуникативной ситуации) пӗрешкел. 1-мӗш сӑпатсӑр калура текст тӗнчипе коммуникаци ситуацийӗн тӗнчи пӗр мар. Кунта калаканӗ икӗ субъекта пайланса каять: калуҫӑ тата герой. 3-мӗш формӑра тӗнчесен пӗрлӗхӗ ҫук. Кунта калаҫаканӑн фигури 3-мӗш сӑпатра палӑрать.

Калу 2 тӗслӗ пулать: 1) ҫырса кӑтартни (описание); 2) шухӑша ӳкни (рассуждение). Ҫырса кӑтартнин те тӗрлӗрен тӗсӗсем пур: характеристика, пейзаж, портрет. ЛЭСра ҫырса кӑтартнине ҫапла ӑнлантарнӑ: «Описание, вид повествования, в котором изображается какая либо статичная картина: портрет, обстановка действия, пейзаж, интерьер и т.п. Выделяют статическое и динамическое описание. Статическое описание не входит во временное развертывание действия и прерывает развитие событий... Оно может использоваться в качестве приема ретардации, торможения действия... Динамическое описание – обычно небольшое по объему, включено в событие и не приостанавливает действия; например, пейзаж дается через восприятие по ходу его передвижения в пространстве... Описание как вид пове-

ствования зависит от «точки зрения» (оценочной, пространственной, психологической) автора или рассказчика. Характер описания зависит от жанра, стиля, принадлежности автора и произведения к определенному направлению» (с.260).

**Характеристика** тесе персонажсен, ĕç-пуçсен, кулянусен уйрăмрах енĕсене палăртнине калаççĕ. Терминăн ансăртарах пĕлтерĕшĕ те пур. Геройсене хăйсемех (автохарактеристика) ытти персонажсем е автор хак панисем пулаççĕ. Çакăн йышши характеристика çырса кăтартнипе шухăша ўкни хушшинче тăрать, илемлĕ ўкерĕве (художественное изображение) пĕтĕмлетме пулăшать.

**Пейзаж** – илемлĕ хайлавăн содержани тата композици компоненчĕсенчен пĕри: тулашри тĕнче талккăшне (вырăнне) çырса кăтартни. Халăх сăмахлăхĕнче пейзаж психологи параллеллĕхĕн (психологический параллелизм) 1-мĕш пайĕнче тĕл пулать. Çав çут çанталăк ўкерчĕкĕ уйрăм çыннăн ăшри туйăмне, тăрăмне (состояние) лайăхрах пĕлме пулăшать. Пейзажа герой, ытти персонажсем е калуçă курнă пек кăтартма май пур.

**Портрет** – геройăн тулашри енĕсене (сăн-сăпатне, уттине, тыткаларăшне, хусканăвне, мимикине, çи-пуçне) ўкерсе, çырса кăтартнин пĕр тĕсĕ. Портрет тесе çыравçă е ўнерçĕ çинчен документлă е мемуар евĕрлĕ çырнă очерка та калаççĕ.

**Хронотоп** (М.М.Бахтин терминĕ) тесе илемлĕ литературăри вăхăтпа талккăша калаççĕ. Илемлĕ хайлаври хронотоп вăхăтпа талккăш уйрăлми пĕрлешсе ларнине пула йĕркеленет. Вăхăт çăралать, курăмлă пулса тăрать, талккăш вара вăхăт, сюжет, истори хусканăвне кĕрсе каять. Сăмахран, сюжет аталанса, тăтăшланса пырать, вăхăтăн пĕр тапхăрне çеç кăтартмасть, ытларах сăнать. Апла хронотопра вăхăт сăнарĕ тата талккăш (вырăнĕ) палăрать. М.М.Бахтин хăйĕн «Формы времени и хронотопа в романе» ĕçĕнче тĕрлĕ йышши вăхăта (авантюрлă, метаморфозăллă, биографиллĕ, идилиллĕ, карнавallă т.ыт.те) тишкерсе тухнă. Пăхса тухнă хронотопсен пĕлтерĕшĕсем çинчен çапла çырать: «Прежде всего, очевидно их сюжетное значение. Они являются органи-

зационными центрами основных сюжетных событий романа. В хронотопе завязываются и развязываются сюжетные узлы... Им принадлежит основное сюжетообразующее значение.

Вместе с этим бросается в глаза изобразительное значение хронотопов. Время приобретает в них чувственно-наглядный характер: сюжетные события в хронотопе конкретизируются, обрастают плетью, наполняются кровью. О событии можно сообщить, осведомить, можно при этом дать точные указания о месте времени его свершения. Но событие не становится образом. Хронотоп же дает существенную почву для показа изображения событий. И это именно благодаря особому сгущению и конкретизации примет времени – времени человеческой жизни, исторического времени – на определенных участках пространства. Это и создает возможность строить изображение событий в хронотопе (вокруг хронотопа). Он служит преимущественной точкой для развертывания «сцен» в романе. Таким образом, хронотоп как преимущественная материализация времени в пространстве является центром изобразительной конкретизации, воплощения для всего романа. Все абстрактные элементы романа – философские и социальные обобщения, идеи, анализы причин и следствий и т.п. – тяготеют к хронотопу и через него наполняются плотью и кровью, приобщаются к художественной образности. Таково изобразительное значение хронотопа» (Вопросы литературы и эстетики. М., 1975. С.398-399).

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. Калуçă (повествователь) термина ăнлантарăр.
2. Мĕнле-мĕнле калу формисем пулаççĕ?
3. Калу формисенчи текстпа коммуникаци ситуацийĕн тĕнчисем.
4. Çырса кăтартни (описание). Тĕсĕсем.
5. Хронотоп.

## Усӑ курмалли литература

Кожевников, Н.А. Типы повествования в русской литературе XIX–XX вв. /Н.А. Кожевников.- М., 1994.

Бахтин, М.М. Формы времени и хронотопа в романе // Вопросы литературы и эстетики.- М., 1975.- С.234-407.

Есин, А.Б. Время и пространство. С.47-61; Себина Е.Н. Описание. Пейзаж. С.220-239; Тамарченко Н.Д. Повествование. С.279-295; Юркина Л.А. Портрет. С.296-307 // Введение в литературоведение: учеб. пособие.- М., 2000.

Сӑнарлӑ сӑмах культурин чӑвашла традицийӗсем. Илемлӗ пуплевӗн хӑйне евӗрлӗхӗ, калу. Калуҫӑ сӑнарӗ // Федоров, Г.И. Иван Мучи пултарулӑхӗ тата чӑваш литературинчи кулӑшӑн илемлӗ хӑйне евӗрлӗхӗ.- Шупашкар, 2001.- 11-16 с.

## *XV лекци*
## Проза тишкерӗвӗ. Автор пуплевӗ

Кирек мӗнле тишкерӳре те тӗпчевҫӗн произведенин пахалӑхне, автор ӑсталӑхне кӑтартса памалла. Чи малтанах унӑн темипе идейи ҫинчен чарӑнса тӑмалла, произведенире пулса иртекен ӗҫсем, унӑн геройӗсем ҫинчен каласмалла, вӗсен ӗҫне-хӗлне, характерне тимлемелле, сӑнарсен системине уйӑрса илмелле. Унтан – характер уйрӑмлӑхӗ тата конфликт, конфликт – сюжет никӗсӗ, унӑн уйрӑмлӑхӗ; характер аталанӑвӗн логики ҫинче чарӑнса тӑмалла. Сюжет элеменчӗсем, композици тытӑмӗ. Конфликт ҫивӗчленсе пынӑ май герой характерӗ уҫҫӑн палӑрни, характера уҫса панӑ чухне автор усӑ куракан мелсем. Автор стилӗ, чӗлхи. Стиль нумай енлӗхӗ, унӑн виҫӗ тӗсӗ: 1) вӑхӑт (самана) стилӗ, ытларах вӑхӑт проблемисемпе ҫыхӑннӑ; 2) литературӑри пӗр евӗр туртӑмсем (психологилле, лирикӑлла); 3) уйрӑм писатель стилӗ, писатель ӑсталӑхӗпе ҫыхӑннӑ. Произведение тишкернӗ чухне ҫавӑн пекех виҫӗ компонента шута илмелле: пурнӑҫ – литерату-

ра (сăмах искусстви) – наука (литературоведени саккунĕсем). Сăмахран, герой проблеми: пурнăçри çын (прототип), тишлă. Çав вăхăтрах, кăткăс характер, вăл пĕр енлĕ пулманни. Литературоведение шута илсе, характер логикине тытса пыни, конфликт аталаннине йĕрлесе пыни, характер уйрăмлăхне кульминациллĕ самантра кăтартни. Каларăмăр, произведение тишкерме темăпа идейăна палăртнинчен пуçламалла. Тепĕр чухне темăпа идейăна палăртма унăн ячĕ, эпиграфсем пулăшаççĕ. Сăмахран, Хв. Уяр хăйĕн «Таната» ятлă романĕнче эпиграф вырăнне Н.И.Ашмарин словарĕнчи йĕркесемпе усă курнă: «Таната çыхса тăваççĕ, кайăк тытма. Вара карса хураççĕ. Вара кайăк çыхланса ÿкет». Автор кунта ĕлĕкхи чăваш хресченĕсем пусмăр серепинче нушаланса пурăннине систерет.

Произведенин темипе идейăлла содержанийĕ сюжетпа çыхăннă. Тĕп сюжет йĕрĕ тата ытти сюжет йĕрĕсем пулаççĕ. Романра тĕп конфликтсăр пуçне ытти конфликтсем те пулаççĕ. Кашни конфликтра кульминациллĕ самант пур. Кашни сюжет йĕрĕн – хăйĕн композицийĕ, мелĕсем, паллисем т.ыт.те.

Пур искусство никĕсĕнче те яланах илемлĕх (художественность) тăмалла. Апла илемлĕ литературăна та илем (эстетика) куçĕпе хаклани те кирлĕ. Эстетика пур япалара та палăрать. Литературăра вара илемлĕх пирки калаçмалла.

Илемлĕх мелĕсенче кирек хăçан та илемçĕ (художник) тăрать. Илемçĕ вăл сăнар. Пĕтĕм илемлĕ литература хайлавĕ нумай сийлĕ. Тĕслĕхрен, 1) герой тата сăнланă ситуаци (çын ăшĕнчи хусканусем, истори таппи, ...); 2) çакна ÿкерсе параканĕ – калуçă (повествователь). Геройсем темиçе те пулаççĕ, кашнин хăйĕн ĕмĕчĕ, шухăшĕ, шанăçĕ, сюжет йĕрĕсем темиçе, калуçăпа геройсем хушшинчи çыхăнăва автор йĕркелесе пырать; 3) автор сăнарĕ–калуçă – тĕрлĕ ĕç-пуç çинчен каласа параканни, тепĕр чухне герой ăшĕнче мĕн пулнине калуçă пĕлсе те юлаймасть, мĕншĕн тесен герой хăй пурнăçĕпе пурăнать. Автор сăнарĕн енĕсем: а) автор произведенири тĕрлĕ пайсене, сийсене, событисемпе эпизодсене, ĕç-пуçа шухăш пĕрлĕхĕ туса чăмăртакан

пĕлтерĕшлĕ; ă) автор сăнланă пурнăçа хак парасшăн (сивлет е ырлать). Укернĕ пурнăçа хакламалли майсем: 1) пĕр героя тепĕр герой урлă хаклани; 2) пĕр событи çумĕнче тепĕр событи çырса кăтартни; 3) хайлавăн пуçламăшĕпе вĕçĕ хушшинчи çыхăнăва йĕркелесси (текст содержанине кура кашни сыпăк (пай) хушма пĕлтерĕшлĕ); тĕслĕхрен, Салампи юрри – юрату юрри, ăна Алмазов илемлетнĕ, вĕсем пĕрле юрлаççĕ; 4) илемçĕ (художник) сăнарĕ – çыравçă каланă философиллĕ шухăшсем (этем кун-çулĕ çине вăл мĕнле пăхни т.ыт.те); тĕслĕхшĕн, Людмила Сачковăн «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» хайлавĕнчи шухăшĕ – арçын ачасемпе хĕр ачасен ар çулне çитнĕ чухне асăрханулла пулмалла; – ашшĕ-амăшĕсен пулăшăвĕ, ырă канашĕ, вĕрентĕвĕ этем шăпине йĕркелекен факторсенчен пĕри т.ыт.те.

Художник сăнарĕ вăл каланă шухăшсен пĕрлĕхĕ, произведенире юлнă çыравçă: М.Федоров, К.Иванов, А.Артемьев ... вĕсем культура символĕ пулса тăнă.

Илемлĕ литература хайлавĕ – нумай сийлĕ пулăм. Сăвăра та, поэмăра та, романра та çав сийсене тупма пĕлмелле. Поэзире хăйне евĕр, кунта лирикăлла кăмăл туйăм тĕпре, пĕр-пĕр çыннăн эмоци туйăмĕ малта. Анчах çав эмоци туйăмне кăмăллакан та пур – ăна лирика геройĕ тетпĕр. Эпикăлла поэзире, прозăра – тĕрлĕ ĕç-пуçсем, тĕрлĕ характерсем, психологилле хирĕçтăрусем – çаксене пĕрлештерекенĕ автор сăнарĕ, тĕпре калуçă (повествователь), калавçă (рассказчик) сăнарĕ пулать.

**Нумайсийлĕх** произведенисен илемлĕхне кăмăлласа тăрать. Нумайсийлĕх – литературăри илемлĕх палли, вăл пулмасан произведени пулмасть.

Пуплев хăй евĕрлĕхĕ нумай чухне стильпе тачă çыхăннă. Стиль вăл – çыравçă пурнăçа хăйне евĕр шухăш туйăмпа, илемлĕх мелĕсемпе сăнлани. Çавăнпа та автор пуплевне унăн стилĕнчен уйăрса пăхма май çук.

Роман ытти эпика жанрĕсенчен чи малтан нумайсийлĕхе (многослойность), нумайсаслăха (многоголосие) пула уйрăлса тăрать.

М. Бахтин тĕпчевçĕ романра çапларах композиципе стиль пĕрлĕхĕсен типĕсем (типы композиционно-стилистических единств) пуррине палăртать:

1) авторăн тÿрĕ калавĕ (прямое авторское повествование);

2) çырусăр йăла калăвĕн (сказăн) тĕрлĕ (формисене стилизацилени) тĕсĕсем (автор хăйне геройсемпе çывăхлатнине кăтартакан калу тĕслĕхĕ, сказ урăх (ют) çын сăмахĕн çырăнни);

3) çурма литературăллă йăла калавĕсен (çыру, кун кĕнеки т.ыт.те) тĕсĕсем;

4) автор пуплевĕн илемлĕх тулашĕнчи тĕрлĕ тĕсĕсем (мораль, философи, ăслăлăх шухăшĕсене ўкерни...);

5) геройсен стиль тĕлĕшĕнчен пайăрланă пуплевĕсем.

Çак тĕрлĕ стильсем романра система туса пĕрлĕхлĕ стиле пăхăнаççĕ. Çав пĕрлĕхлĕ стиль уйрăм стильсенчен чылай çÿлерех тăрать. «Роман, – çырать М.М.Бахтин, – это художественно организованное социальное разноречие, иногда разноязычие, и индивидуальная разноголосица. Внутренняя расслоенность единого национального языка на социальные диалекты, групповые манеры, профессиональные жаргоны, жанровые языки, языки поколений и возрастов, языки авторитетов, языки кружков и мимолетних мод, языки социально-политических дней и даже часов (у каждого дня свой лозунг, свой словарь, свои акценты), – эта внутренняя расслоенность каждого языка в каждый данный момент его исторического существования – необходимая предпосылка романного жанра: социальным разноречием и вырастающей на его почве индивидуальной разноголосицей роман оркеструет все свои темы, весь свой изображаемый и выражаемый предметно-смысловой мир. Авторская речь, речи рассказчиков, вставные жанры, речи героев – это только те основные композиционные единства, с помощью которых разноречие вводится в роман; каждое из них допускает многообразие социальных голосов и разнообразие связей и соотношений между ними (всегда в той или иной степени диалогизированных). Эти особые связи и соотношения между

высказываниями и языками, это движение темы по языкам и речам, ее дробление в струях и каплях социального разноречия, диалогизация ее – такова основная особенность романной стилистики» (Хрестоматия. С.340).

Мĕнпе уйрăлса тăрать илемлĕ пуплев ахаллинчен? Чи малтан уйрăм сăмах çаврăнăшĕсемпе тата шухăш çаврăмĕсемпе, вĕсем хăйсемех чĕлхе вĕçне пымаççĕ, шухăшлама тивет. Авалхи риторикăна йĕркелекенсем (Аристотель, Цицерон, Квинтилиан) малтанхи сăмах теоретикĕсем çапла шутланă: çын кĕлеткин естествăллă положени пур – алăсене аялалла усса тăрасси тата ытти положенисем–позăсем. Çапла вара çынсен пуплевĕнче пур пĕр «естествăллă» – ансат пуплев тата ыттисем – позăсем, фигурăсем.

ЛЭСра фигурăсем пирки çапла ăнлантарнă: «фигура – (лат. figura – очертание, внешний вид, образ) любые обороты речи, отступающие от некоторой (ближе неопределяемой) нормы разговорной естественности (с.466). Авалхи риторикăрах шухăш тата сăмах фигурисене уйăрса пăхнă. Шухăш фигури ăна тепĕр хут каланипĕн улшăнмасть, сăмах фигури тепĕр хут каласа парсан улшăнать. Шухăш фигурисем конкретлă сĕннĕ шухăща палăртма кирлĕ пулсан, сăмах фигурисем пĕрпĕр вырăнти калаçу-пуплеве асăрхаттарма кирлĕ. Шухăш фигурисен тĕсĕсем: 1) оратор позицине уçăмлатаканни (тӳрлетерех татăклăрах каланисем); 2) япала пĕлтерĕшне уçăмлатаканни (тĕрлĕ антитезăсем); 3) япала çине пăхни, хаклани (пĕрремĕш сăпатран каланипе, кăшкăруллă, риторикăллă мелсемпе, ют çын каланине сăпатлантарнипе); 4) итлекенсемпе хутшăнăва кĕни (обращени, ыйту, каламасăр хăварни). Сăмах фигурисен тĕсĕсем: 1) хутшăну фигури (икĕ хут каланисем, нумай союзлăх); 2) чакару фигури (силлепс, эллипс, союзсăрлăх); 3) куçăмлă фигура (инверси, сăмахсен кăткăс улшăнăвĕ, параллеллĕх тĕсĕсем: изоколон, хиазм, гомеотелефтон). Сăмах фигурисен тĕсĕсен ретне тропсене те кĕртеççĕ.

Студентсен Г.И.Федорован ӗҫӗнче ҫак ӑнлавсем пирки тӗплӗн вуласа пӗлмелле: антитеза, хиазм, оксюморон, параллеллӗх, градаци, повтор, каламасӑр хӑварни, риторикӑлла ыйтупа чӗнӳ, инверси, союзсӑрлӑх, нумай союзлӑх, поэтикӑллӑ пунктуаци, монтаж, парадокс, тавтологи, цитата.

### Ыйтусемпе ӗҫсем

1. Проза тишкерӗвӗн хӑйевӗрлӗхӗ.
2. Романра композиципе стиль пӗрлӗхӗсен еплерех типӗсем пулаҫҫӗ?
3. М.М.Бахтин романри чӗлхесемпе стильсем ҫинчен мӗн каланӑ («Слово в романе» ӗҫӗ тӑрӑх)?
4. Шухӑш фигури тата унӑн тӗсӗсем.
5. Сӑмах фигури тата унӑн тӗсӗсем.

### Усӑ курмалли литература

Бахтин, М.М. Слово в романе // Введение в литературоведение. - М., 1988. - С.339-340. - М., 1997.- С.236-237.

Федоров, Г.И. Чӑваш литературин сӑнарлӑ пуплев теорийӗ /Г.И. Федоров.- Шупашкар, 1994. -51-64 с.

## *XVI лекци*
## Драма хӑй евӗрлӗхӗ. Герой пӗрлӗхӗ

Прозӑпа драма лирикӑран сюжет пулнипе уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Литературӑн ҫак икӗ ретӗнче (несӗлӗнче) вӑхӑтпа талккӑшра пулса иртекен ӗҫ-пуҫа тӗплӗн сӑнлавлаҫҫӗ. Сюжета икӗ мелпе йӗркелеме май пур: 1) калӑва аякран пӑхса каласа панӑ пек (пулса иртни ҫинчен пӗлтернӗ пек), 2) персонажсене хӑйсене калаҫтарнӑ пек (халь пулса иртнине кӑтартнӑ пек). Прозӑра ҫырса кӑтартнӑ ӗҫ-пуҫпа пуплев йӗркелесе пыни хушшинче питех те пысӑк хушӑ, дистанци. Проза хайлавӗнче пулса иртекен ӗҫсем иртсе кайнӑ, вӗсене хак панӑ тата тепӗр хут аса илнӗ тейӗн. Вулавҫӑ прозӑри пурнӑҫа калуҫӑ урлӑ кӑна пӗлет. Калуҫӑ вара вӑхӑта васкатма та, вӑ-

рахлатма та пултарать, вулавҫа вӑл геройсенчен уйӑрса урӑх вырӑна е вӑхӑта ним мар ҫитерет. Эпикӑра вӑхӑтпа талккӑша йӗркелес ӗҫре нимӗнле йывӑрлӑх та ҫук. Эпика жанрӗсенче калуҫӑ калаҫӑвӗпе геройсен пуплевӗ ирӗклӗн йӗркеленсе пыраҫҫӗ. Кунта пуплев пӗлтерӳ (сообщение) функцине пурнӑҫлать. Калу мелӗпе персонажӑн ӑшри туйӑмне, унӑн характерне питех те тарӑннӑн уҫса пама май пур.

Драмӑпа проза уйрӑмлӑхӗ ҫинчен Л.Н.Толстой калани питех те интереслӗ. «Война и мир» эпопейӑна ҫырнӑ хыҫҫӑн вӑл «Власть тьмы» пьесӑна хайлама пуҫӑнать, ҫавна май йывӑрлӑхсем умне ҫитсе тӑрать. Драмӑна романистӑн хӑнӑхнӑ мелӗсемпе калӑплама май ҫук иккен. «Здесь, – тет вӑл драма пирки, – нельзя например, подготовлять моменты переживания героев, нельзя заставлять их думать на сцене, вспоминать, освещать их характер отступлениями в прошлое, все это скучно, нудно и не естественно. Нужны уже готовые моменты. Перед публикой должны быть уже оформленные состояния души, принятые решения... Только такие рельефы души... волнуют и трогают зрителя... Роман и повесть – работа живописная, там мастер водит кистью и кладет мазки на полотно. Там фоны, тени, переходные тона, а драма – область чисто скульптурная. Работать приходится резцом, и не класть мазки, а высекать рельефы» (Хализев В.Е. Драма как ряд литературы. М., 1986. С.116).

Эпос фонӗнче драмӑн майӗсем сахалтарах. Унта тӗпре персонажсен тӳрӗ пуплевӗ тӑрать. Каланӑ сӑмахсене кунта никам та ӑнлантарса памасть. Калу элеменчӗсем ҫук мар-ха, вӗсем персонажсен калаҫӑвӗнче тӗл пулаҫҫӗ (пулса иртни ҫинчен каласа пани, аса илӳ т.ыт.те). Ҫапах та драмӑра тӗпре калу мар, геройсен сӑмах действийӗсем. Драмӑра прозӑри пек икӗ вӑхӑт (калуҫӑ вӑхӑчӗ тата персонажсен вӑхӑчӗ) мар, унта пуплевпе ӗҫ-пуҫ пӗрле, харӑс йӗркеленсе пыраҫҫӗ. Монологсемпе диалогсем хальхи вӑхӑтра сӑнлавланнӑ ӗҫпуҫпа пӗр вӑхӑтрах пулса иртеҫҫӗ. Драма сӑнарӗсемпе эпир пурнӑҫ факчӗсем ҫинчен такам каласа пани урлӑ

мар, çав фактсене хамăр куçпа курса киленетпĕр. Драмăри монологсемпе диалогсем хăйсен функцийĕпе пĕлтерӳ мар, действи пулса тăраççĕ. Литературăн драма несĕлĕ чĕлхен вăл е ку ситуацири пиçĕлĕхне тĕрĕслет, геройăн пуплев поведенине сăнлать.

Драма форми çыравçа тĕрлĕ условисене пăхăнтарттарать. Чи малтанах сцена хайлав калăпăшне хĕстерет: унти ĕç-пуç 2-3 сехетрен ытла тăсăлмасть. Драмăра прозăри пек портретпа пейзажа анлăн кăтартма май çук, çавăнпа та унти япала тĕнчи действишĕн кăна тĕл пулать. Кунта сăмах ӳкерчĕкĕсем тăвайман, шалти монологсене анлăн ăнлантарнине кĕртме çук. Çакă вара психологизма тарăнлатма самаях чăрмантарать.

Литературăн драма несĕлĕ çинчен В.Е.Хализев çапла çырать: «Какую бы значительную роль в драматических произведениях ни приобретали повествовательные фрагменты, как бы ни дробилось изображаемое действие, как бы ни подчинились звучащие вслух высказывания персонажей логике их внутренней речи, драма привержена к замкнутым в пространстве и времени картинам («сценическим эпизодам»), которые наполнены высказываниями персонажей. Это главный, исходный признак драматического рода литературы».

Сăмах искусствине Аристотель евĕрлевлĕ (подражательное) ӳнерсен ретне лартнă, эпос каласа панипе, драма вара действие кăтартнипе евĕрленет тенĕ. Сцена çинче мĕнле действи пулса иртет-ха? Чи малтан выляв (исполнение), урăхла каласан, пурнăç событийĕнчен сăнлав (изображение) событийĕ туни.

Прозăри сăнлав калу урлă йĕркеленет пулсан, драмăри сăнлав выляв урлă йĕркеленет. Выляв событийĕ (событие исполнения) – драмăн шалти событийĕ, вăл проза хайлавĕнчи калу событийĕпе пĕр шайри элемент.

Прозăри калуçăпа персонаж хушшинче «эпика дистанцийĕ» пур, ăна пула герой сăмахĕпе калуçă сăмахне уйăрса пăхма май килет. Вылявçăн сăнлавлă сăмахĕ геройăн сăнлавлă сăмахĕпе тӳр килнĕрен куракана вылявçă çук пек туйăнать. Урăхла каласан, сцена çинче эпир артиста мар, персонажа куратпăр. Прозăра калу

событине калуҫӑ йӗркелет пулсан, драмӑри выляв событине персонаж-вылявҫӑ йӗркелет.

Выляв событийӗ драма геройӗн пӗрлӗхне тума пулӑшать. Ҫав пӗрлӗхлӗ сӑнарӑн икӗ шайӗ пур: пӗри вӑл фабула персонажӗн, тепри – сюжет персонажӗн (вылявҫӑ-артистӑн). Тӗслӗхшӗн Ф.Павловӑн «Ялта» драминчи пӗр репликӑна илсе пӑхар:

«Елюк. Эй, телейсӗр Ванюк. Эпӗ те сана нумай кӗтрӗм. Анчах та турӑ тепӗр тӗслӗ ҫырнӑ. Эпӗ ӗнтӗ тин сан пата пырсан та хам телее тупас ҫук. Каярах пултӑн. Чӑннипе каласан, эпӗ сана хӗрхенетӗп. Сут тӑвас тегӗн пулсан, сут ту – санӑн ирӗк».

Ку реплика «икӗ планлӑ» (В.Виноградов терминӗ) пулни курӑнать. Пӗр енчен пӑхсан, Елюк рольне выляканӗ ҫак сӑмахсене каласа героиня сӑнарне калӑплать. Тепӗр енчен пӑхсан, реплика адреслӑ, ӑна Ванюк (пьеса персонажӗ) ячӗпе каланӑ. Ванюк рольне выляканӗ те икӗ япалана тытса тӑрать: ун умӗнче Елюк сӑнарӗ (фабула персонажӗ) тата ҫав сӑнара кӑлараканӗ (сюжет персонажӗ) пур. Иккӗмӗшӗшӗн вӑл куравҫӑ кӑна, пӗрремӗшӗшӗн вара Елюкӑн (персонажӑн) малтанхи упӑшки.

Ҫапла вара герой пӗрлӗхне темиҫе шайри хутшӑнусене пӗр вӑхӑтра асра тытсан кӑна тума май пур. Авторпа вылявҫӑ, вылявҫӑпа куравҫӑ, куравҫӑпа персонаж хушшинчи ҫыхӑнусене уйрӑмшарӑн тӗпчени драмӑна тарӑннӑн, туллин ӑнланма пулӑшать.

## Ыйтусемпе ӗҫсем

1. Мӗн вӑл драма? Драма несӗлӗ.
2. Драмӑпа проза уйрӑмлӑхӗсем ҫинчен Л.Н.Толстой мӗн каланӑ?
3. Драмӑн тӗп паллисем.
4. Драмӑн выляв событийӗ тата драма геройӗн пӗрлӗхӗ.
5. ЛЭСран ҫак ӑнлавсене ҫырса илӗр, вӗсен пӗлтерӗшӗсене ӑнлантарса парӑр: драма (100 с.), диалог (96 с.), диалогическая речь и монологическая речь (96 с.), перипетия (274 с.).

### Усă курмалли литература

Волков, И.Ф. Теория литературы /И.Ф. Волков.- М., 1995.- С.98-101.

Поспелов, Г.Н. Теория литературы /Г.Н. Поспелов.- М., 1978.- С.113-118.

Хализев, В.Е. Драма как род литературы /В.Е. Хализев. - М., 1986.

Нестеров, И.В. Диалог и монолог. (с.75-86); Хализев, В.Е. Драма. (с. 87-93) //Введение в литературоведение: учеб. пособие. - М., 2000.

Граник, Г.Г. Драматургия... Театр /Г.Г. Граник, Л.А. Концевая. - М., 2001. – 320 с.

## *XVII лекци*

## Илемлĕ сăмахлăхри несĕлсен хăй евĕрлĕхĕ. Драма сюжечĕсем. Драмăри пуплев

Лирикăлла (поэзи тĕнчинче) жанрсемпе пурнăç пулăмĕсене туллин сăнласа кăтартма май çук. Вĕсенче уйрăм çыннăн шухăш-туйăмĕсене, кăмăл хумханăвĕсене сăнласа парасси тĕп вырăнта. Эпикăлла произведенисенче (повесть, роман) нумай çынсен лару-тăруне, шухăш-ĕмĕчĕсене, ĕçне-хĕлне сăнласа параççĕ. Драмăлла произведенире сăнласа панисĕр пуçне çавнах куçăн кăтартса пама (действисем урлă) май пур. Поэзи – форма тĕлĕшĕнчен хăйне евĕрлĕ виçе, калăп, интонаци пуррипе палăрать. Поэзи те, проза та, драма та тулаш енчен (форма тĕлĕшĕнчен) уйрăлса тăраççĕ пулин те, вĕсен тĕллевĕ пĕр – эстетикăлла кăмăл-туйăма вăратасси. Драмăра выляса кăтартакан пурнăç событийĕ фабула чăнлăхĕнче, выляв событийĕ вара сюжет чăнлăхĕнче пулса иртет. Фабула сăнарĕ вăл персонаж, сюжет сăнарĕ – çав роле вылякан артист. Тĕслĕхрен, «Ялта» спектакльти Елюк сăнарĕн «пĕрлĕхĕ» – «Елюк» ятлă персонаж кăна мар, унăн рольне вылякан артистка та.

Шел пулин те, театрта çав илемлĕ пĕрлĕх пулса иртеймест. Драматургăн япалисене лайăх лартас тесен

театр специфики ҫинчен мар, драма специфики пирки шухăшламалла. Драма геройĕн пĕрлĕхне фабула персонажĕпе вылявҫă тӳр килет. Выляв событийĕсĕр геройсен пĕрлĕхне тума май ҫук. Эппин, хайлав геройĕ ҫинчен калаҫас пулсан пирĕн выляв событине малтан пуҫласа вĕҫне ҫитиччен курмалла.

Сюжет йĕркелекен элемент вăл чи малтан конфликт. Мифологипе фольклорта ӳнерĕн малтанхи тапхăрĕнчех йĕркеленнĕ сюжет конфликчĕ палăрать, унăн схеми: «йĕрке – хаос – йĕрке». Ҫакăн пек сюжет 3 пайлă: 1) малтанхи тăнăҫлăх, гармони; 2) аркану; 3) тăнăҫлăх йĕркеленĕвĕ е ҫирĕпленĕвĕ. Ҫапларах мелпе юмахсен сюжечĕсем йĕркеленеҫҫĕ. Виҫĕ пайлă сюжет схеми тарăн тымарлă, вăл авалхи космогони мифĕсенчен вăй илет. Ҫак архетиплă сюжет конструкцийĕ хăйĕн тĕнче тĕмсĕленĕвĕпе (миросозерцание) консервативлă: вăл ҫирĕпленсе ларнă йĕркесене хӳтĕлет, сăвапа кăларать. Ҫак сюжет ҫирĕпленнĕ тĕнче тытăмне шанать, ăна йышăнать. Унăн конфликчĕ ҫын шăписен шайĕнчи тăнăҫсăрлăха пĕтерме ыйтать. Авалхи илемлĕ сăмахлăх пĕр катастрофилле финала кăна пĕлет: тĕнче йĕркине аркатма хăтланакана (уйрăм ҫынпа е йăха) кирлĕ пек тавăрни, айăплани. К.Ивановăн «Нарспи» поэминче те ҫавăн йышши финал: Нарспипе Сетнер, традицилле йĕркесене хирĕҫ кайнăскерсем, трагеди патне ҫитсе тухаҫҫĕ, вĕсене традицилле общество «тавăрать».

Ҫакăн йышши конфликт пурнăҫ хирĕҫӳсĕр текен идейăран тухса тăрать. Ун пек конфликта казуслă теҫҫĕ, хирĕҫӳсем ансăр вырăнта пулса иртеҫҫĕ, вĕсене уйрăм герой пĕтерме пултарать.

Урăх йышши конфликтсем те пур, вĕсем пурнăҫ тăрăмне, хирĕҫĕвне тĕпе хурса аталанаҫҫĕ. Ҫав конфликт уйрăм ҫынран пачах та килмест. Ку хирĕҫӳ пурнăҫ йĕркин пĕр пайĕ е тĕп енĕ пек курăнать.

**Тулашри действи** – конфликта йĕркелекенĕ, татса параканĕ. Ҫавăн йышши действи урлă ҫынсен хăюлăхне, пуҫарулăхне, паттăрлăхне кăтартма меллĕ. Ҫын кри-

зислă самантсенче çĕнтерÿ е парăну çулне суйласа илнине палăртнă чухне те тулашри действи кирлĕ.

Авалхи грексен комедийĕнчи действи аталанусăр, вăл хĕрсе пымасть. Шекспир традицийĕсенче вăл аталануллă, сценăсерен хĕрсе пырать. Ĕç-пуç хĕрсе пыни геройсен пурнăçĕнчи пысăк улшăнусенчен чылай килет. Тулашри ăнсăртран улшăнусем пулсан та, пулмасан та пултараççĕ иккен. Драма ÿнерĕ ĕç-пуç ăнсăртран тепĕр майлă çаврăнса тухнине кăтартма кăмăллать. Ăнсăртран Елюкпа Çтаппан туйне Ванюк персе çитет («Ялта»), ăнсăртран чăваш киреметĕнче Айтар çыннисемпе вырăс салтакĕсем тĕл пулаççĕ («Айтарăн» малтанхи варианчĕ) т.ыт.те.

Ăнсăртлăх драмăра кăна мар, эпикăра та анлă сарăлнă. «Нарспи» поэмăра Сетнер ăнсăртран вилет. Маларах унăн вилĕмне юмăç та ăнсăртран пĕлет-çке!

Илемлĕ хайлавра ăнсăртлăхпа усă курни тĕнче тĕмсĕлĕвĕн шыравĕсенчен чылай килет пулас. Перипетисене, кăткăс хутшăнусене пула пурнăç чĕррĕн курăнать, вăл кашни утăмрах тепĕр майлă çаврăнса кайма пултарассине туйтарать. Сюжетри ăнсăртран пулни вăл вăрттăн та демонла вăй пурри çинчен аса илтерсе тăрать, çав хушăрах ăнăçулăхпа телей те тупма пултарасса шантарать. Сюжетри ăнсăртлăха пула унăн динамикине хĕртме май пур. Ăнсăртлăха пула çак тĕнче пулса кайнă теççĕ чăваш мифĕсем. Ăнсăртлăха пула чăвашсем хальхи çĕрсем çине килсе вырнаçнă теççĕ халапсем. Ăнсăртлăха пула пейĕт геройĕсем çĕре кĕреççĕ, юмахри чухăнсем пуйса каяççĕ.. Ăнсăртлăх вăл килĕшĕве, çирĕпленсе ларнă тĕнчене вăхăтлăха аркатни кăна-мĕн. Çав ăнсăртран пулнă тĕркешÿ-хирĕçÿ хыççăн тăнăç пурнăç çитетех. Каллех «йĕрке – хаос – йĕрке» схемăллă хирĕçÿ курăнать.

Европа драматургийĕнче Шекспир хыççăн тулашри действие мала лартассине ерипен пăрахăçласа пынă. Çапах та унпа реализм ÿнерĕнче те ăнăçлă усă курнă. Эппин, çав конфликт типĕ хăйĕн мехелне пĕтермен-ха. Сюжетăн кăткăс авăкĕсене куравçă çав-çавах кăмăллать пулас.

Шалти действин элеменчĕсем сăмахлăхăн тĕрлĕ тапхăрти палăкĕсенче палăраççĕ. Герой хăйĕн эмоци туйăмне палăртни, шалтан тапса тухакан хăват тулашри ĕç-пуçа хускатса яни чылай хайлавра пур. Ытларах чухне геройăн шалти действийĕ тулашри тĕнчене хăй евĕрлĕ йышăннăран пулать.

Шалти действие тĕпе хунă хайлавсенче герой хăйĕн кăмăлне йӳле ямасть, хăй çине тиркевлĕ куçпа пăхать. Ку тĕлĕшрен тулашри действие тĕпе хунă хайлавсенчи геройсем чылай ирĕклĕрех. Çапах та паянхи драматурги хитре сюжетсене кăмăлласах каймасть, пурнăç кăткăслăхне кăтартма шалти действи меллĕрех-мĕн. Чăваш драматургийĕнчи «Судра» камит кунта питех те пĕлтерĕшлĕ. Çав хайлаври тулашри действи ĕç-пуçа, хусканăва пула мар, сăмах вылявне пула аталанать. Ф.Павлов пьесăри кулăшла ситуацисене чăваш сăмахĕн нумай пĕлтерĕшĕсене «вылятса» тăвать. Чăвашăн ассоциацилле шухăшлав питех те вăйлă аталаннине асра тытни наци драмин çулне-йĕрне палăртма май парать. Тен, сăмахăн нумай пĕлтерĕшне «вылятса» килес драматургсем символла хайлавсем, мифла+сюжетлă тата сăнарлă трагедисем çырма пултарĕç?

Сюжетри ĕç-хĕл вăхăта е сăлтава тĕпе хурса аталанма пултарать. Вăхăта мала лартса аталанакан сюжетри ĕç-пуçсем пĕр-пĕринпе черетленсе пыраççĕ. Ĕç-хĕл сăлтавне йĕрлекен сюжет пурнăçри пĕр-пĕр ситуацие васкамасăр тĕпчеме май парать. Ун йышши сюжета урăхла концентрацилле сюжет теççĕ.

Классикăлла драматурги малтанласа концентрацилле сюжета тĕпе хурса аталанать. Чехов хыççăн театра монтажлă-ассоциацилле принципа тĕпе хунă драма пырса кĕрет. Ун йышши пьесăсенче темиçе пĕр танлă сюжет йĕрĕ пур.

Актерсен сцена пуплевĕ икĕ адреслă: вĕсем ытти персонажсене выляканесемшĕн тата куравçăсемшĕн калаçаççĕ. Актер-персонажсем пĕр-пĕринпе диалог йĕркипе, куравçăсемпе – монолог йĕркипе хутшăнаççĕ. Çак виçĕ субъектлăх актер пуплевне уйрăм сĕм кĕртет. Унăн

темĕнле савăшуллă самантсенче те публика пуррине манса кайма юрамасть. Драмăри монолог вăл геройсен шалти монологĕпе пачах та тӳр килмест. Драмăри пуплев тĕрлĕ ситуацисен черетленĕвне ҫыхма кирлĕ. Ҫав хушăрах драмăри диалог действие кăтартмалли тĕп мел.

## Ыйтусемпе ĕҫсем

1. «Фабула сăнарĕ», «сюжет сăнарĕ», «драма сăнарĕ» ăнлавсен пĕлтерĕшĕсем.
2. Драмăри конфликт тĕсĕсем.
3. Тулашри тата шалти действи. Сюжет тĕсĕсем.
4. Драмăри пуплев.

## Усă курмалли литература

Хализев, В.Е. Теория литературы /В.Е. Хализев.- М., 1999.- С.46, 75, 93, 100, 200, 213, 222-223, 294-318, 341-342, 355.

## Терминсен чăвашла-вырăсла словарĕ

ăн – сознание

илемлĕ ăн – художественное сознание

ăн айĕ – подсознание

ăн айĕнчи – подсознательное

ăн юхăмĕ – поток сознания

ăнлав – понятие, термин

ăнсăртлăх – случайность

вăйлату – градация

виçе – размер

вулавçă – читатель (критик)

ĕнерÿ – настрой

икĕ йĕркеллĕ сăвă – двустишие, дистих

икĕ саслă сăмах – двуголосое слово

илем – эстетика

илемĕш – художество

илемлĕ – художественный

илемлĕ пĕлтерÿ йĕркеленĕвĕ – организация художественного сообщения

илемлĕ ÿкерÿ – художественное изображение

илемçĕ – художник

илемлĕх мелĕ – художественный прием

ирĕклĕ сăвă – свободный стих (верлибр)

йăла калавĕ – бытовое повествование

йĕрке – строка

йĕркеленÿ – организация

калавçă – рассказчик

калу – повествование

кĕвĕ – музыка

калу пĕлтерĕшĕ – смысл высказывания

калу субъекчĕ – субъект высказывания

калу форми – повествовательная форма

калуçă – повествователь

карт – стопа

коммуникаци ситуацийĕн тĕнчи – мир коммуникативной ситуации

куляну – переживание
культурăпа тулнă талккăш – культурное пространство
курăм – видение
кӳртĕм – введение
меслет – метод
мехел – потенциал
несĕл – род
литература несĕлĕ – литературный род
несĕп – нравственность
нумай саслăх – многоголосие
палăрту – выражение
пĕлтерни – сообщение
пĕрлĕх – целостность
пусмаллă – ступенчатый
Пысăк вăхăт – Большое время
састаш – рифма
сас-хура – информация
сăвă хывăм – стихосложение
сăмахлă культура – словесная культура
сăмахлăх – словесность
сăнар – образ
сăнлав – воплощение
сикчĕ – цезура
çавра – строфа
çемĕ – ритм
çĕкленӳлли – возвышенное
çыра – описание
талккăш – пространство
тан сыпăклă – силлабика
тăрăм – состояние
тĕнче курăм – мировидение
тĕнче тĕмсĕлӳ – миросозерцание
тишкерӳ – анализ
тӳрĕ калу – прямое повествование
тытăм – структура
ӳнер – искусство
хавха – пафос
хайла – творить

хайлав – произведение
харкамлу – персонификация
харкамçă – герой
хăй евĕрлĕх – своеобразие
хăй хаклăхлă – самоценный
хирĕçлетӳ – антитеза
хушăну фигури – фигура прибавления
хирĕç тăру – конфликт
шай – уровень
шалти монолог – внутренний монолог
шалти тĕнче – внутренний мир
шута ӳкни – рассуждение
шухăшлав – мышление
шухăшласа кăларнă сăнлав – вымысел
чакару фигури – фигура убавления

***Хушса пани 2***

## Литературоведени ытти ăслăлăхсемпе çыхăнура тăни

<table>
<tr><td>Литература теорийĕ</td><td>Литература историйĕ</td><td colspan="3">Литература критики</td></tr>
<tr><td>Эстетика тата пĕтĕмĕшле ӳнер теорийĕ</td><td>Пĕтĕмĕшле истори</td><td colspan="3">Ку чухнехи литература</td></tr>
<tr><td>Культура теорийĕ</td><td>Литература чĕлхин историйĕ</td><td>Произведени</td><td>Автор</td><td>Литература процесĕ</td></tr>
<tr><td>Чĕлхе пĕлĕвĕ</td><td rowspan="3">Социологи</td><td rowspan="3">Рецензи</td><td rowspan="3">Писатель портречĕ</td><td rowspan="3">Обзорлă статья</td></tr>
<tr><td>Психологи</td></tr>
<tr><td>Философи</td></tr>
</table>

*Хушса пани 3*

## Сăвă элеменчĕсен тытăмĕ

Пĕтĕмĕшле содержани

**Логика ăнлавĕн речĕ**

| | |
|---|---|
| лирика геройĕ (харкамçи) | тема сăнарĕ |
| лирика тĕнчи | мотив |
| | лирика зачинĕ |
| | композици |

**Сăнар речĕ**

сăнарлă шухăш
сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхĕ
куçăмлă пĕлтерĕшсем (тропсем)
сăнарсен çыхăнăвĕ

**Эмоци речĕ**

уçăмсăрлăх эмоцине йĕркелеççĕ:
нумай пĕлтерĕшлĕх (сăмахри, сăнарти)
уçăмсăрлăх (интонаципе, çемĕри, повторсенчи)

Пĕтĕмĕшле форма

**Интонаципе çемĕ речĕ**

| | |
|---|---|
| Сăввăн интонацийĕ | Метр тĕсĕсем: |
| сасă тонĕ | тан сыпăклă сăвă, |
| тембр | силлабика |
| сикчĕ, константа | силлабика-тоника |
| пусăм | Метр виçисем: |
| темп | силлабика сăвви |
| | силлабика -тоника сăввин |

**Повтор речĕ**

| | |
|---|---|
| Повторсем: | Повторсен позицийĕсем: |
| синтаксис | йĕрке пуçĕнчи |
| сăмах | йĕркери çуркамсен |
| пуçĕнчи | |
| сасă | йĕрке вĕçĕнчи (састаш) |
| артикуляци | ирĕклĕ вырнаçнисем |

## Проза хайлавĕн элеменчĕсен тытăмĕ

*Пĕтĕмĕшле содержани*

**ИДЕЙĂПА ЭСТЕТИКА СОДЕРЖАНИЙĔ**

*Илемлĕ содержани типĕсем*

| Ансаттисем | Кăткăссисем |
|---|---|
| героикăлли | трагедилли |
| этологилли | драмăлли |
| сентименталли | романли |
| интеллектуалли | комикли |
| романтикăлли | |

**ТЕМА СОДЕРЖАНИЙĔ**

Тема (автор концепцийĕ, хайлавăн шалти теми, пайăр темăсем)

Характер, конфликт, унăн уйрăм пайĕсем

Фабула (тема шайĕнчи хронологие пăхăннă ĕç-пуçа каласа пани)

**ИЛЕМЛĔ ТЕКСТ СЕМАНТИКИ**

Персонажсен çыхăнăвĕ
- герой – ытти персонажсем
- герой – автор
- герой – прототип

Сюжет (ĕç-пуçа персонажсемпе калуçă урлă хронологие пăхăнмасăр каласа пани)

Сюжет йĕркеленет характерсен конфликтне пула ĕç-пуç черетленĕвне пула

**ИЛЕМЛĔ ПĔЛТЕРУ ЙĔРКЕЛЕНĔВĔ**

Калу формисем

1-мĕш сăпатри (калавçă хайлав тĕнчинче)

1-мĕш сăпатсăр (геройпа калуçă тĕрлĕ тĕнчере)

3-мĕш сăпатри (персонаж калуçă ячĕпе калаçать)

Калу тĕсĕсем:

çырса кăтартни (характеристика, пейзаж, портрет)

шухăша ўкни

хайлаври вăхăтпа тапкăш

**АВТОР ПУПЛЕВĔ**

Романри композиципе стиль пĕрлĕхĕсен типĕсем

Пуплев фигурисем

## Тупмалли


Умсăмах ---------------------------------------------------------------------- 3
I лекци. Литературоведени курсĕн тĕллевĕ
тата унăн ăслăлăхри вырăнĕ---------------------------------------------- 7
II лекци. Филологи. Çырусăр тата çырулла сăмахлăх.
Илемлĕ литература ---------------------------------------------------------- 12
III лекци. Литературăн культурăри тата ӳнерти вырăнĕ.
Хайлавăн функциллĕ пурнăçĕ ------------------------------------------ 16
IV лекци. Хайлав пĕрлĕхĕ. Тишкерӳ тата интерпретаци
ыйтăвĕсем ------------------------------------------------------------------ 20
V лекци. Лирика. Лирика речĕ. Лирика геройĕ.
Тема сăнарĕ. Мотив ------------------------------------------------------ 26
VI лекци. Лирикăри сăнар речĕ. Сăмахăн нумай
пĕлтерĕшлĕхĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшсем (тропсем)------------ 30
VII лекци. Лирика речĕ. Сăвă элеменчĕсен çыхăнăвĕ.
Лирикăри эмоци речĕ---------------------------------------------------- 33
VIII лекци. Лирика тишкерĕвĕ. Лирика тĕсĕсем.
Интонаципе çемĕ речĕ ------------------------------------------------- 36
IX лекци. Лирика тишкерĕвĕ. Артикуляципе
сасă повторĕсен речĕ -------------------------------------------------- 40
X лекци.
Чăваш сăвви. Унăн хăй евĕрлĕхĕ ----------------------------------- 42
XI лекци. Эпос. Эпика несĕлĕ. Идейăпа эстетика
содержанийĕ. Илемлĕ содержанин типĕсем------------------------ 46
XII лекци. Проза тишкерĕвĕ. Тема содержанийĕ.
Характер. Фабула -------------------------------------------------------- 50
XIII лекци. Проза тишкерĕвĕ. Персонажсем.
Автор тата герой. Прототип. Сюжет. Пайăр пуплев -------- 54
XIV лекци. Проза тишкерĕвĕ. Калу формисем.
Вăхăтпа талккăша йĕркелени----------------------------------------- 58
XV лекци. Проза тишкерĕвĕ. Автор пуплевĕ ------------------ 63
XVI лекци. Драма хăй евĕрлĕхĕ. Герой пĕрлĕхĕ -------------- 68
XVII лекци. Илемлĕ сăмахлăхри несĕлсен хăй евĕрлĕхĕ.
Драма сюжечĕсем. Драмăри пуплев ------------------------------ 72
Хушса пани ------------------------------------------------------------------ 76

*Учебное издание*

**РОДИОНОВ Виталий Григорьевич**
**ТРОФИМОВ Леонид Юрьевич**

**ВВЕДЕНИЕ**
**В ЛИТЕРАТУРОВЕДЕНИЕ**

Курс лекций

Редактор Н.С. Орлова

Подписано в печать 30.03.2009 г. Формат 60×84/16.
Бумага газетная. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 4,88. Уч.-изд. л. 4,26.
Тираж 100 экз. Заказ № 106.

Чувашский государственный университет
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15